# Тĕнче шайĕнчи чемпионсем хатĕрлекен тренер мĕншĕн хăйне кăкшăмри шапапа танлаштарать? ● 2

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

12(934) №, 2016, ака/апрель, 2

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

●Пилĕке ачаллах авмалла 3 стр.

●Чăваш эстрада юррин малашлăхĕ пуррине çамрăксем çирĕплетрĕç 4 стр.

●Пăшал кĕрслетнĕ... Хĕрарăм мăшăрне çухатса хăрах çунатпа тăрса юлнă 5 стр.

●Сысна çурине пулăшма, хур çемйине çĕнетме 8 стр.

●“Хĕрĕх урлă каçнă хĕрарăмсен хушшинче ĕçленипех... качча тухма хăратăп” 9 стр.

●Тăван пулăн терĕм те – çичĕ ют ан пул 10 стр.

ÇĂЛТĂР ÇŬПÇИ

## Театрта – партизан пек



Светлана САВЕЛЬЕВА, Чăваш халăх артистки

Шупашкарта пурăнакансенченех хăшĕ-пĕри Çамрăксен театрĕ Трактор тăвакансен керменĕнче вырнаçнине пĕлмест. Пирĕн, артистсен, хамăра ятăн кил çук. Çавăнпах партизансен театрĕнче ĕçленĕнех туйăнать. Чуна ыраттаракан çак ыйту тавра тахçантанпах калаçатпăр, анчах вĕçне-хĕрне тухаймастпăр.

Акă нумаях пулмасть Димитровграда кайса килтĕмĕр. Артистсен гримернăйĕнче, ытти çĕрти пекех, йăлтах алă айĕнче. Çакăнтах хывăнса тăхăнаççĕ, бижутери таранччен хăвараççĕ вĕсем. Эпир çи-пуçа ниçта çакма пĕлмесĕр пӳлĕмрен пӳлĕме хамăрпа пĕрле йăтса çӳретпĕр. Керменте репетици вырăнне те малтанах палăртма йывăр. Лару-тăру уçăмлансан тин режиссер пулăшуçи артистсене хыпалансах шырама пуçлать.

Гастроле çӳреме автобус та парасшăн мар пире. Киввине тахçанах улăштармалла та... Пĕр транспортпах 13-мĕш çул çула тухатпăр, ял-хулана чун çимĕçĕ илсе каятпăр. Халăх пирĕн спектакльсене юратса пăхать. Кăштахран мĕнле çитĕпĕр-ши вĕсем патне?

Эпир вĕренме кĕнĕ чухне конкурс çав тери пысăкчĕ, 20-30 çамрăкран пĕрне артиста вĕренме суйласа илетчĕç. Халĕ шкултан вĕренсе тухакансене çак ĕç питех илĕртмест. Укçа сахал тӳленипе те çыхăннă ахăр çакă. Çамрăксен хăйсен пурнăçне йĕркелеме тăрăшмалла. Паян чун хушнипе сцена çине тухаканнисем кăна спектакльте выляççĕ, сăнар хыççăн сăнар калăпласçĕ. Театртан та тин ĕçлеме килнисем тухса каяççĕ. Эпир, аслă ăру çыннисем, ĕç пăрахсан пирĕн вырăна кам юлĕ?

Малтан чăвашла хитре калаçма вĕрентĕмĕр, халĕ вырăсла спектакльсем те лартма тивет, мĕншĕн тесен пирĕн те план тултармалла, курав залне ытларах халăх пуçтармалла. Çавăнпах ача садĕнчи шăпăрлансене интереслĕ тата шкул программине кĕртнĕ авторсен ĕçĕсем тăрăх спектакль хатĕрлеме тăрăшатпăр. Вĕсем театра кăнтăрла килме пултараççĕ. Ку пирĕншĕн çав тери меллĕ, мĕншĕн тесен Трактор тăвакансен культура керменĕн сценине каçсерен концерт йĕркелекенсем арендăлаççĕ.

Юрать килте йăлтах йĕркеллĕ. Икĕ мăнукпа йăпанса пурăнатăп: пĕри – 4 çула, тепри çулталăка çитрĕ. Пĕрле ташлатпăр та, юрлатпăр та.

**Çанталăк**

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 02.04 | + 3 | – 3 |
| 03.04 | + 3 | 0 |
| 04.04 | + 2 | 0 |
| 05.04 | + 2 | – 1 |
| 06.04 | + 4 | – 2 |
| 07.04 | + 3 | 0 |
| 08.04 | + 4 | – 2 |



● АНАСТАСИЯ ОСИПОВĂПА ХĔРĔ КСЮША ТĂХТАВА ТА УСĂЛЛĂ ИРТТЕРЧĔÇ.

Татьяна НАУМОВА сăнӳкерчĕкĕ.

3 стр.

## Усăллă та, хаваслă та

**Çĕрпӳри куç курманнисен пĕрлешĕвĕнче çак кунсенче спортпа туслисем пухăнчĕç. Кунта сĕтелçи теннис выляс енĕпе пĕрремĕш хутчен республика чемпионачĕ иртрĕ. Кунашкал ăмăртусем кун пек шайра халиччен иртмен.**

**Спортăн ку тĕсĕ куç курманнисен хушшинче пирĕн республикăра нумаях пулмасть çеç аталанма пуçланă. Апла пулин те пурте тенĕ пекех юратма ĕлкĕрнĕ ăна. Ахальтен-и вылянă май хавхаланаççĕ, хăпартланаççĕ.**

Акă ăмăртура хĕрарăмсен хушшинче чемпион ятне тивĕçнĕ Наталья Мастерова та уçă кăмăлне пытармарĕ.

– Кунта иккĕмĕш хутчен килтĕм. Малтанхинче иккĕмĕш вырăн йышăннăччĕ. Пĕр тан пулма пурин куçне те çыхаççĕ, сасă кăларакан çăмхана итлесе вылятăн та. Питĕ интереслĕ, çав тери килĕшет. Кун пек сĕтел Муркашра пулсан час-часах вылямалла та – çук çав. Тепре чĕнсен те килетĕпех. Пĕрремĕш хут вылянă чухне майне пĕлмесĕрех килнĕччĕ. Тытса курсан вăйă илĕртрĕ. Куç курманнисене çеç мар, ыттисене те килĕшмелле вăл, – хавхаланăвне пытармарĕ Муркаш районĕнчен килнĕ Наталья Вениаминовна.

**2016 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен "Хыпара" – 736,02 тенкĕпе, "Хыпар-эрнекуна" 338,34 тенкĕпе çырăнтараççĕ.**

**«ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔН» хакĕ – 354,42 тенкĕ.**

КУÇА-КУÇĂН

# «Çуралнă тăрăхрах кирлĕ пултăм»



**Владимир Краснов – Раççей тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ, Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, СССР спорт мастерĕ, спорт дисциплинисен профессорĕ, педагогика наукисен кандидачĕ. «Тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орденăн – 2 степень медальне, «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медалĕсене тивĕçнĕ вăл. Комсомольски районĕнчи Комсомольски ялĕнче çуралса ÿснĕ чăваш чемпионĕ пысăк квалификациллĕ 30 ытла велоăмăртуçа хатĕрленĕ. Вĕсен йышĕнче – Олимп вăййисене хутшăннă Вера Андреева, Надежда Пашкова, Универсиада çĕнтерÿçи Ксения Кириллова, Раççей чемпионĕ Ольга Терентьева. Ытларахăшĕ вара ăна тĕнче чемпионĕн, Олимп вăййисен бронза призерĕн Ирина Калентьевăн тренерĕ пек те пĕлет. Пĕтĕм пурнăçне спорта халалланă вăл.**

**Рио-де-Жанейрора иртекен Олимп вăййисем çывхарнă май спортсменсемпе те нумай ĕçлемелле, ăмăрту хыççăн – ăмăрту, унта хутшăнмалла. Темиçе кунлăха кăна Шупашкара таврăннă хушăра «ЧХ» корреспонденчĕпе курнăçмашкăн вăхăт уйăрма пултарчĕ вăл.**

## Пултаруллă, хастар

**– Владимир Николаевич, тăван тăрăха темиçе кунлăха çеç килнĕ терĕр. Халĕ мĕнле ăмăртăва хатĕрленетĕр?**

– Халĕ Олимп вăййи умĕнхи суйлавсем пыраççĕ. Республикăра чухне «Росинка» базăра хатĕрленетпĕр. Нарăс уйăхĕнче Кипрта пултăмăр. Унта пĕчĕк ăмăртусене хутшăнтăмăр. Ун хыççăн Израиле кусрăмăр. Унта Израиль чемпионачĕ иртрĕ. Малалла – Австрали, Швеци, Германи. Çу уйăхĕн вĕçĕччен Шупашкара çаврăнса çитейместпĕр. Тĕнче кубокĕсем, Европа чемпионачĕсем, вара ытти ăмăрту чўк уйăхĕччен тăсăлать.

**– Кампа ĕçлетĕр халĕ?**

– Манăн ушкăн пур. 6 хĕр унта. Кашниех пултаруллă та хастар, çирĕп тĕллевлĕ. Пиллĕкĕшĕ Раççей пĕрлештернĕ командин йышне кĕнĕ. Вĕсенчен чи маттуртараххи хальлĕхе Ольга Терентьева, вăл пысăк çитĕнÿсемпе савăнтарать. Пĕлтĕр Испанире иртнĕ тĕнче чемпионатĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Ольга ÿссех пырать, пысăк шанăç кўрет. Ирина Калентьева çавăн пекчĕ. Халĕ эпĕ уншăн телефон-тренер пек, сĕнÿсем çеç паратăп. Хăй те пултаруллă.

Паянхи тĕп тĕллев – Олимпиадăна хутшăнма путевка выляса илесси. Олимпиадăна 56 çĕршыв хутшăнать. Малти сакăр вырăна йышăнакансем икĕ çын тăратаяççĕ, ыттисем – пĕрер. Халĕ эпир çĕршывран икĕ спортсменшăн çул уçас тесе тăрăшатпăр. Вĕсенчен пĕри – Ирина – хутшăнасси халех паллă, вăл очкосене кирлĕ чухлĕ пухса çитернĕ. Ольга çĕршывшăн иккĕмĕш путевка илессишĕн тăрăшать. Çавăнпах шăпах çак спортсменпа çине тăрса ĕçлетĕп те.

Çапах та пысăк çитĕнÿсем тăватпăр эпир. Раççей – пысăк çĕршыв. Эпир, пĕчĕк республика, Раççейре çеç мар, тĕнчере те малтисен йышĕнче. Пĕлтĕр Калентьева тĕнче чемпионатĕнче иккĕмĕш пулнăччĕ. Терентьева та 23 çулченхи хĕрарăмсен йышĕнче çавăн пек медалех тивĕçрĕ. Çак кăтартусем – эпир аван ĕçленин палли. Пысăк та вăйлă шкулсем Раççейре татах та пур.

**– Эппин, маунтинбайк аталанать...**

– Спортăн экстремаллă тĕсĕ вăй илсех пырать. Интереслĕ пулмасан никама та нимĕн те кăсăклантармасть. Çынсене хăрушлăх илĕртет. Маунтинбайк та çав йышрах. Ахаль çынна трасса ярăнса тухма çук пек туйăнать, чăрмавсем ытла та пысăк-çке. Сывлăхшăн, пурнăçшăн хăрушă вырăн нумай. Сăртран вĕсем машина пек 140-150 километр хăвăртлăхпа анаççĕ, çÿллĕ вырăнсенчен аялалла миçе метр сикеççĕ, сывлăшра вĕçеççĕ – çаксем пĕтĕмпех илĕртеççĕ те.

## Хура мунча

**– Эсир – спортăн çак тĕсне пирĕн çĕршыва илсе килекенсенчен пĕри. Мĕнрен пуçланнине ас тăватăр-и?**

– Совет Союзĕ арканчĕ, çĕршывра укçа çук. 1993 çул. Эпĕ шăпах çак вăхăтра спортсменсемпе Францире иртекен Тур де Франс шоссе ăмăртăвне кайнăччĕ. Канмалли пĕр кун туссем спортăн çĕнĕ тĕсне курма чĕнчĕç. Килĕшрĕм. Швеципе Франци чиккинех кайрăмăр. Туллăсăрлă вырăнсем. Пачах урăх велосипедсем. Пĕтĕмпех интереслĕ. Çав тери килĕшрĕ мана. Нимĕнле машина та çук. Шоссе ăмăртăвĕнчен пачах расна. «Чăвашра аталантарасчĕ», – шухăшлатăп. Хавхаланса кайрăм. Таврăнсан Мускавра кун пирки каласа кăтартрăм. «Буржуйсен тĕсĕ. Питĕ хаклă. Сирĕн Чăвашра тусем те çук», – теççĕ. Анчах сăрт-вар нумай-çке!

Ту çинчи условисене евĕрлекен тĕрлĕ аппарат шухăшласа кăлартăм. Вĕсем пире хатĕрленме пулăшрĕç. Никам та кĕтменччĕ: 1996 çулта Надежда Пашковăпа Олимп вăййине хутшăнтăмăр. Пурте тĕлĕннĕ! Анчах ăнмарĕ. Спортсмен стартрах ÿксе велосипедне çĕмĕрчĕ. Пысăк шанăçпа кайнăччĕ, анчах 16-17-мĕш вырăнсене çеç тивĕçрĕмĕр. Кулянтăм. Пĕтĕмпех пăрахас килчĕ. Америкăна каяс кăмăлăм та пурччĕ. Çакăн пирки Америкăри тусăмсене пĕлтертĕм. Вĕсем 6-7 çын пухăнса мана илсе кайма тесе хăнана та килчĕç.

Ун чухне эпĕ общежитире пурăнаттăм. Хăнана мĕнле кĕртĕп-ха! Вĕсем пирки ректора Лев Куракова пĕлтеретĕп. Вĕсем те мĕн тумаллине пĕлмеççĕ. Хăнасене университетăн профилакторине вырнаçтарма йышăнтăмăр. Аэропорта автобуспах кайрăмăр. Юлташсем вара мăшăрĕсемпех килнĕ. Юлташăм Чак ниçта та мар, эпĕ пурăнакан вырăна илсе кайма хушать. «Эсĕ пирĕн килте пулнă, эпир те сан патна каятпăр», – тет. Пĕчĕк пÿлĕмре пурăннине ăнлантараймастăп. Общежити умне çитрĕмĕр те: «Мĕнле сăпайлă-çке эсĕ, ав вăн мĕн пысăкăш çурт!» – тет тусăм. Çĕршыв шайĕнчи тренер пĕчĕк пÿлĕмре пурăннине ĕненме йывăр пулчĕ вĕсене.

Козьмодемьянск çывăхĕнче тусăм пурăнатчĕ. Ялан хăнана чĕнетчĕ. Вăрманта çырла ăнса пулнине калатчĕ. Унта та çитрĕмĕр. Хапăлласах йышăнчĕç. Хура мунчара çăвăнтарнăччĕ. Хăнасем ан вараланчăр тесе улăм сарнăччĕ. Анчах та вĕсем çÿллĕ, тĕреклĕ. Иккĕшĕ – уйрăмах. Пĕтĕмпех хăрăмлантарса пĕтнĕччĕ. «Мунча вăл – хăрăмпа сĕрĕнмелли вырăн», – тесе кулатчĕ Чак кайран та. Çакна вăл ыттисене те ĕнентересшĕн шÿтлетчĕ вăхăт иртсен те.

Америкăна каймарăм. Тăван çĕршыврах юлас терĕм. Ывăлăма та пăрахаймарăм.

Кашни утăм тумах мĕн тери йывăрччĕ. Эпир çак шая çитессе никам та шанманччĕ. Халĕ акă мĕнле мăнаçлă эпир. Шупашкарта Маунтинбайк центрĕ тăваççĕ. Чăваш Республики ку енĕпе Раççейре малта пырать: эпир – ку тĕсе аталантаракансем, маунтинбайк центрĕ те пирĕн кăна. Диссертаци те ку енĕпе пĕрремĕш хÿтĕленĕ эпĕ, теорипе практика кĕнекисем те пĕрремĕш хатĕрленĕ. Тĕрлĕ аппарат шухăшласа кăлартăм. Ку спорта аталантарассинче манăн тÿпе те пурри савăнтарать.

## Юмах та – чăнлăх

**– Ют чĕлхесен факультетĕнче вĕреннĕ, анчах пурнăçăра спортпа çыхăнтарнă эсир, çав вăхăтрах – медицинăпа та.**

– Тĕлĕнмелле те, чăннипех çапла. Медицина пĕлĕвĕ çук пулин те тĕрлĕ япала шухăшласа кăларса вĕсемпе çынсене сыватнă та. Патент та пĕрре мар илнĕ. Медицина ура çине тăратайманнисене те пулăшнă.

Медицина енне мĕншĕн туртăнтăм-ха? Спортсменсем питĕ нумайăн ÿкетчĕç. Аманатчĕç. Тренировкăсене татма юрамасть-çке. Çавсем валли ятарлă хатĕрсем шухăшласа кăлартăм та. Питĕ ансат пек, анчах – витĕмлĕ. Ыратнине хамăн алăпа та пĕрре мар иртернĕ. Юлташсем килетчĕç, ыттисене калатчĕç – нумай килекен пулчĕç. Алă ывăнатчĕ. Çавăнпах урăх аппарат шухăшласа кăларма тиврĕ. Унпа ĕçленĕ хыççăн алăпа кăштах çеç çемçететтĕм.

Пултаруллă çамрăксене пĕрремĕш курсра вĕренекенсен хушшинче шыраттăм. Тĕрлĕ факультетран. Хĕлле йĕлтĕрпе кам хытă чупнине сăнаттăм, хам пата чĕнеттĕм. Медицина факультетĕнче Ирина Иванова вĕренетчĕ. Халĕ вăл Испанире пурăнать. Пăхатăп та – лайăх чупать. Чĕнтĕм – килĕшрĕ. Çине тăрса хатĕрлентĕмĕр. Ăмăртăва хутшăнма медосмотр тухмаллаччĕ. Йĕрсе таврăнчĕ. Сколиоз тесе çырса панă. Çав тери хастар, тăрăшуллăччĕ вăл. Медфакра вĕренме те çăмăл мар-çке. Ирхи 5 сехетре тăрса физкультура тăватчĕ, унтан – занятисем, каллех тренировка, лабораторие чупатчĕ, каçхине Етĕрне çулĕ çине тухаттăмăр. Эпĕ – мотоциклпа, вăл – велосипедпа.

Ирăна тÿрлетме шантартăм. Ятарлă аппаратсем шухăшласа кăларма пуçларăм. Канаш районĕнченччĕ вăл, ашшĕ-амăшĕ çукчĕ, тăванĕпе ÿснĕ. Ачаранах йывăр ĕçлеттернĕ ăна, çырмаран шыва витресемпе йăтнă. 13 уйăхра тÿрленчĕ вĕт çурăм шăмми. Калама çеç çăмăл паллах. Ĕçĕ питĕ йывăрччĕ. Тухтăр ĕненесшĕн те пулман. Ирина вырăнне тĕрĕслеме урăх хĕре кĕртнĕ тесе шанмарĕç малтан. Çак япалана ăслăлăх-практика конференцийĕнче каласа кăтартрăм. Хамăр кафедрăра медицина секцинче тухса каласма сĕнчĕç. Ĕненмерĕç, «юмах калатăн» терĕç. Хама суя вырăнне йышăнни питĕ кÿрентерчĕ. Тухса кайрăм. Кайран шухăшласа илтĕм те Иринăна пĕрле илсе кайма тĕв турăм. Кашни уйăхра туса пынă сăнсене те илтĕмĕр. «Хама хÿтĕлеме килтĕм. Малтан пушă алăпа килсе йăнăш турăм», – пырса кĕтĕм тепĕр хутчен.

Пĕрре тата ашшĕпе амăшĕ университета кафедрăна вуникĕ султи хĕрне алă çинче йăтса кĕчĕç. Сусăрччĕ вăл. Çурăм шăмми çав тери кукăрăлса пĕтнĕччĕ. Хусана операци тума кайнă вĕсем. Унта вара ачине мана кăтартма сĕннĕ. «Эпĕ тухтăр мар. Мана куншăн хупсах лартаççĕ. Манăн ирĕк çук, эпĕ тренер кăна», – тесе йышăнмарăм. Хĕрача утаймастчĕ те-çке. Пăхма та хăрушăччĕ. Каçхине каллех килчĕç. Тарăхсах калаçрăм. Пăхмарăм та. Кайрĕç. 2-3 кунран каллех килчĕç.

Ăмăртăва хутшăнмалли ятарлă велосипедсем питĕ хаклă. Лайăх ярăнакан виçĕ хĕр тупăнчĕ. Раççей чемпионатне Ижевска каймаллаччĕ, анчах велосипедсем çук. Ниçтан та укçа тупайманнипе çунса çÿретĕп. «Юрать. Виçĕ велосипед кирлĕ. Мускавра тупма пулать», – терĕм хайхисене вĕсенчен хăпас тесе. Эрнерен тупăнчĕç хайхисем. Мĕн тумалла? «Пултараймастăп», – тесе калас килет, анчах сăмаха тымаллах. Нимĕн те тăваймăн. Ĕçе пуçăнмах тиврĕ. Манăн пурнăçри пĕртен-пĕр пысăк çитĕнÿ – çав хĕрачана ура çине тăратрăм. Ирина ятлă вăл. Халĕ Самарта пурăнать, медицинăпа аппаланать, çынсене ура çине тăратассипе пысăк çитĕнÿсем тăвать. Вăл та медицина пĕлĕвĕ илмен. Тĕмĕнле парадокс ку. Манăн та ятарлă пĕлÿ çук-çке.

**– Медицина енĕпе çеç ĕçлес темерĕр-и?**

– Тус-юлташ та спорта пăрахса хистесех медицинăпа ĕçлеме сĕнчĕ. Бизнес-план та хатĕрленĕччĕ. Патент та пурччĕ. Анчах эпĕ вĕсене итлемерĕм. Велосипедлă пулнă-çке. Медицина пĕлĕвĕ çукки те чарчĕ. Спортра та кирлĕрех пултăм-тăр.

Тăватă çул пысăк кăтартусем пулаймарĕç. Тăваттăмĕш вырăншăн медаль çук-çке. Эпир ĕçлемен пек курăнать кун пек чухне. Эпир вара çичĕ хут тар кăлариччен тăрăшатпăр, курăнмасть кăна. Мĕн кăна тÿсме тивмест-ши! Эпĕ кăкшăмри шапа пек: тапаланатăп-тапаланатăп, хăймаран çу пулать те сиксе тухатăпах.

**– Эсир çитсе курман кĕтес юлман та пулĕ. Хăвăра ăçта канлĕрех туятăр?**

– Ăçта çуралнă – çавăнта кирлĕ пулнă теççĕ. Тăста та чĕннĕ мана. Анчах «Росинкăран» лайăххи нимĕн те çук.

*Владимир Краснов Лондонри Олимп вăййисем умĕн панă интервьюра вăлтапа Атăл хĕррине тухса ларма ĕмĕтленнине вуларăм. Вăхăт тупайнă-ши? Ыйтма та мантăм. Тен, кăçалхи Олимпиада хыççăн пулла тухса ларĕ вăл. Тен, пурăна-киле Владимир Николаевичăн медицинăри çĕнĕ ĕçĕсем пирки те илтĕпĕр-ха.*

**Татьяна НАУМОВА.**



ТĔЛПУЛУ

# Икĕ ен килĕштерсе ĕçлесшĕн

**Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе Чăваш Ен делегацийĕ икĕ кун Челябинск облаçĕнче пулнă. Икĕ ен ĕçлĕ хутшăнусем йĕркелес, çĕнĕ партнерсем тупас ыйтăва сӳтсе явнă.**



Республика ертӳçи Челябинск облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕпе Борис Дубровскипе тĕл пулнă. Бизнеса аталантарас, çак тытăмри ĕç опычĕпе пĕр-пĕрне паллаштарас ыйтусене сӳтсе явнă. Михаил Игнатьев Чăваш Енри предприятисемпе организацисем пирки тĕплĕн каласа кăтартнă. Кĕпĕрнаттăра электротехника промышленноçĕн предприятийĕсем кăсăклантарнă. Михаил Васильевич республикăри организацисемпе предприятисен 20 проценчĕ инноваци продукцине кăларнине, Чăваш Енре агропромышленноç комплексĕ аталаннине палăртнă.

Пуш уйăхĕн 29-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев облаç онкодиспансерĕн Позитрон эмисси томографи центрĕн ĕçĕпе паллашнă. Михаил Васильевич çак центр Шупашкарта онкологи диспансерĕн çĕнĕ хирурги корпусне çĕкленине, сиплев учрежденийĕн ятарлă медицина пулăшăвĕ кӳрессипе çыхăннă хăвачĕ ӳснине кура пушшех интереслине палăртнă.

Чăваш Ен делегацийĕ «Высота 239» заводăн пысăк диаметрлă пăрăхсем кăларакан цехĕнче пулнă. Кунта ĕç пахалăхĕ пысăк, экологие тивĕçтерекен технологисене тĕпе хураççĕ. Пăрăхсемпе Çурçĕрте, çĕр чĕтренекен вырăнсенче, тинĕс тĕпĕнче усă кураççĕ. Цех пуçлăхĕ Андрей Когут каланă тăрăх – предприяти хăвачĕ çултанăкра 600 пин тонна пăрăх туса кăлармалăх.

Делегаци çавăн пекех «Чурилово» агрокомплексра пулнă, теплицăсенче пахчаçимĕç çитĕнтермелли çĕнĕ технологисемпе паллашнă. Агрокомплексра теплицăсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 25 гектарпа танлашать, çултанăкра 25 пин тонна пахчаçимĕç çитĕнтереççĕ. Производствăна 2012 çултанпа 5 хут пысăклатма пултарнă. Паян кунта томат, хăяр, симĕс культурăсем ӳстереççĕ. Пахчаçимĕç туса илессине технологи тĕлĕшĕнчен çӳллĕ шайра йĕркеленĕ. Пĕр тăваткал метртан 90 килограмм хăяр, 65 килограмм томат туса илеççĕ.

Юлашкинчен икĕ регион ертӳçи Челябинск облаçĕн Правительствипе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ социаллă тытăм, суту-илӳпе экономика, наукăпа техника, культура тата ытти енпе хутшăнса ĕçлеме палăртакан Килĕшӳве алă пуснă. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев сĕннипе Челябинск облаçĕнче Чăваш Енĕн суту-илӳпе экономика представительствине йĕркелеме йышăннă.

**Елена МИХАЙЛОВА.**

# Усăллă та, хаваслă та

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

Вунă класс хыççăн малтан Шупашкарта заводра ĕçленĕ вăл, качча кайсан мăшăрĕпе пурăнма Кашмаша куçнă. Фермăра ĕçленĕ.

– Куç курми пулса çитрĕ те инвалидность пачĕç. Йывăр ĕçлеме юрамасть тенĕрен килтеларма тытăнтăм. Пĕр ĕне усратпăр. Упăшка Юра пулăшать, унсăрăн йывăр паллах. Пурăнатпăр ыксĕмĕр майĕпен, – тет икĕ ывăл амăшĕ.

Канаш районĕнчен килнĕ Мария Куркина иккĕмĕш пулчĕ. Шупашкарта пурăнакан Анастасия Осипова вара виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

– Хушăран кунта килсе вылятпăр. Питĕ кăсăклă. Шел, сĕтелĕ пĕрре кăна. Кашни районта пулсан питĕ аванччĕ. Ăмăртусен шайĕ те ӳсĕччĕ, эпир те вăйлăрах выльăттăмăр, – терĕ Настя.

– Эпĕ аннешĕн хăйĕнчен те ытларах хумхантăм-тăр. Выляса илессе вĕçне çитиччен шантăм. Вăл хăть те мĕн тунă чухне те тĕрĕс шухăшлать. Пĕр-пĕр йăнăш пулсан та ăна тӳрех тӳрлетет. Акă паян та «штрафной» парсан çийĕнчех тăрăшрĕ те... – тет Ксюша амăшĕ виççĕмĕш çеç пулнăшăн кăштах кулянса. Амăшĕпе пĕрле вăл кунта шашкăлла выляма та вăхăт тупрĕ.

Арçынсен хушшинче вара Эдуард Егоров чи маттурри пулчĕ. Вăл çĕнтерӳçĕ кăна мар, ăмăртăва йĕркелеме ăнтăлакансенчен, пулăшакансенчен пĕри те.

– Куç курманнисен сĕтелçи теннисне республикăра 2012 çултанпа аталантаратпăр. Тĕрлĕ шайри ăмăрту йĕркелетпĕр. Çĕрпӳре хальлĕхе пĕртен-пĕр база кăна-ха. Малтан ятарлă сĕтел иккĕччĕ, пĕрне Шупашкарти куç курманнисен ятарлă шкулне патăмăр.

Атăлçи тăрăхĕнчи, Раççей шайĕнчи ăмăртусене те тухса çӳретпĕр. Малти вырăнсене йышăнатпăр – 6-мĕш вырăнтан кая анса курман-ха. Пĕлтĕр пĕрремĕш хутчен Раççей чемпионачĕ иртрĕ. Кăçал ăна республикăра та иртterес терĕмĕр, – палăртрĕ вăл.

Арçынсен хушшинче иккĕмĕш – Николай Ремеслов /Çĕрпӳ районĕ/, виççĕмĕш Шупашкартан килнĕ Михаил Городнищев пулчĕç.

– Куç курманнисене ятарлă тренерсем çукран физкультурăпа спорт кермене́сене те питех кĕртесшĕн мар. Ку спортра вара нимĕн хăрамалли те çук. Правилăсем те питĕ ансат. Вăйăйи те усăллă – вестибулярлă аппарата вăйлатать, аталантарать. Сĕтелçи теннисĕн кортне хамăр районта та вырнаçтарасчĕ, – ĕмĕтленет Муркашсен вырăнти организацийĕн секретарĕ Елена Никитина.



Выляканенчен чылайăшĕ çак шанăçпа пурăнать. Куç курманнисен ĕмĕтне спонсорсем илтинччĕ...

**Татьяна НАУМОВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕ.

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Ĕçе ачаран хăнăхмасан...

Марина ТУМАЛАНОВА

**Каç еннелле Шупашкарти суту-илӳ комплексне кирпĕч туянма вĕçтертĕмĕр. Ретсен хушшипе утнă чухнех пирĕн çума вуннăри арçын ача çыпăçрĕ. Кунта хăйне ирĕклĕ тытать вăл: сутуçăсемпе калаçать, хăш тавара ăçта вырнаçтарнине лайăх пĕлет. «Çакăнта ĕçлекенĕн ывăлĕ-ши?» – иккĕлентĕм ун çине пăхса.**

**Ача урама та пирĕнпех тухрĕ. «Пулăшнăшăн мана хут укçапа тӳлеççĕ», – ăнлантарать хайхискер. Унччен те пулмарĕ, ыттисемпе танах кирпĕче прицепа тиеме пуçларĕ. Хăваласан та каймасть. Тĕрĕссипе, ăна пулăшма никам та ыйтман. Вăйпитти арçынсемшĕн те 5-10 минутлăх ĕç кăна кунта. Меллĕ самантпа усă курса ун çинчен ытларах пĕлес килчĕ. Вăл çакна кăна кĕтнĕ тейĕн.**

**«Паян – манăн çуралнă кун», – те чăнласах калать, те суять вăл пире. Апла тăк мĕншĕн киле васкамасть пĕчĕк пулăшакан? «Сана çывăх çынсем кĕтеççĕ, хальччен сĕтел те хатĕрленĕ ĕнтĕ», – шеллес те килет ăна. Анчах унăн ĕç кунĕ вĕçленмен имĕш. Ара, лавкка хупăнман-çке. Ашшĕ-амăшĕ ĕçрен чăнах час таврăнмасть-ши вара?**

**«Ĕçлесе илнĕ укçапа пылак çимĕç туянатăп. Канфет-печенипе пиччене, аппана хăналатăп», – пытармасть шкул ачи. Çи-пуçĕ, пушмакĕ ниçтан та çĕтĕлмен, вараланса сăнсăрланман. Апла тăк ашшĕ-амăшĕ ачи-пăчине тумлантармалăх, çитермелĕх ĕçлесе илетех. Унсăрăн арçын ача пылак çимĕç мар, çăкăр туянĕччĕ.**

**Хăй каланă тăрăх, шкулта «4» тата «5»-пе вĕренет. Пушă вăхăтра кăна алăра тытмалăх укçа ĕçлесе илет. Арçын ача çаврăнăçулăхĕнчен, никамран ютшăнманнинчен тĕлĕнтĕм. Транспорт алăкне те уçса парать, телейлĕ çул сунса ăсатать...**

**Те мухтамалла, те ятламалла ăна çакăншăн? Çуркуннехи каникулти шкул ачине никам та ирĕксĕрлесе ĕçлеттермест. Вăл килте компьютерпа выляс е телевизор курас вырăнне усă сывлăшра çӳрет, вăй çитнĕ таран çынсене пулăшать. Кĕсьене хулăнлатассишĕн вăрра каймасть, паллах, лайăх.**

**Яла командировкăна каймассерен хамăрăн вулакансене тĕл пулатпăр. Кинемейсен 6-7 çулта хире тырă вырма тухнине, те çывăрса тăранайманран, те васкаса ĕçленĕрен çурлапа пӳрнене касние аса илеççĕ. Хăшĕ-пĕри килти ĕçсене пула шкула вĕренме те каяйман. Таван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче те, ун хыççăн та ачасем мăн çынпа танах ĕçленĕ.**

**Эпир кĕçĕн класра вĕреннĕ чухнех Тимур команди йĕркеленĕччĕ. Ватăсене кил картишĕнче тирпейлеме, урай çума пулăшаттăмăр. Эпир, çĕнĕйĕркелӳ тапхăрĕччен çуралнисем, хамăр ĕçе укçапа виçме хăнăхман. Ăшă сăмахпа тав туни хаклăрах пулнă пирĕншĕн.**

**Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Хальхи ачасене ĕçлеттернĕшĕн явап тыттараççĕ. 14-ран иртнисем кăна вăхăтлăх ĕçе вырнаçма пултараççĕ. Çĕмĕрлере, сăмахран, çултанăк пуçланнăранпа 14-18 çулсенчи 136 çамрăка шалу тӳлеме пуçланă. Вĕсем шкулта вĕренмен вăхăтра ĕçлемешкĕн организацисемпе килĕшӳ тунă. Ытти тăрăхра та çамрăксене ĕç тупса памашкăн хапăл. Çакă вĕсене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма, ĕç майне вĕренме, укçа хакне пĕлме пулăшĕ.**

**Пĕлтĕр, тĕслĕхрен, хамăр тăрăхри 16100 вĕренекене ĕç тупма пулăшнă. Шалу тӳлеме республика хысниччен 9012,9 пин тенкĕ уйăрнă. Унсăр пуçне муниципалитет бюджетĕнчен 3,8 миллион тенкĕ куçарнă. Çак шутран Шупашкар хула администрацийĕ – 1500 пин, Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕ 260 пин, Канаш хула администрацийĕ 200 пин, Канаш район администрацийĕ 300 пин, Шупашкар район администрацийĕ 250 пин тенкĕ панă.**

**Йывăр лару-тăрури тата преступлени çулĕ çине тăма пултаракан çамрăксене те ĕçе вырнаçтарма тăрăшаççĕ. Вĕсемшĕн каникул вăхăчĕ усăллă иртни çав тери пĕлтерĕшлĕ.**

**Ĕç пурăнма вĕрентет теççĕ. Пилĕк авма ӳркенмен ача пуласлăхра хăйĕн вырăнне тупасси иккĕлентермест. Ĕçлесе çисен çăкăр та тутлăраххине, тăрансан пыл та йӳççине шкулта вĕреннĕ чухнех ăнланса илекене ырламалла çеç.**

ПУЛТАРУЛӐХ

# Чӑваш эстрада юррин пуласлӑхӗ пур

**«Кӗмӗл сасӑ» фестивале Чӑваш Енри хуласемпе районсенчен ҫеҫ мар, кашни ҫулах Раҫҫейӗн тӗрлӗ кӗтесӗнче тӗпленнӗ йӑхташӑмӑрсем те хутшӑнаҫҫӗ. Кӑҫалхи уява пурӗ вуникӗ регионтан килсе ҫитнӗ. Ҫакӑ ҫамрӑксене сцена ҫинче хӑйсен вырӑнне тупма пулӑшать, тус-тӑванлӑха хаклама, чӑваш эстрадине аталантарма май парать.**



В.КУЗЬМИН сӑнӳкерчӗкӗсем.

17-мӗш ҫул иртекен конкурса пӗтӗмпе 38 ҫамрӑк хутшӑнчӗ. Вӗсенчен чылайӑшӗ – Чӑваш Енрен. Республика тулашӗнчен ҫула тухнисем те сахал мар. Хӑнасем Шупашкара Пушкӑрт, Тутар республикисенчен, Чӗмпӗр, Сарӑ ту, Самар, Мурманск, Иркутск, Пенза облаҫӗсенчен, Челябинск хулинчен, Ямал-Ненец автономи округӗнчен килсе ҫитнӗ.

Фестивале хутшӑннӑ ҫамрӑксене ЧНК Президенчӗ Николай Угаслов, ЧР культура министрӗн ҫумӗ Вячеслав Оринов, ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Валерий Клементьев саламларӗҫ. «Кӗмӗл сасӑ» фестиваль чӑвашлӑха, эстрада юррисене аталантарма, йӑх-несӗлтен куҫакан пуянлӑха упрама, йӑла-йӗркене пӑхӑнса пурӑнма пулӑшни тавра сӑмах пуҫарчӗҫ.

Концерт пуҫланиччен уява килнисене Шупашкар районӗнчи «Кӑмӑл» ҫемье ансамблӗ, Елчӗк районӗнчи Патреккел халӑх хорӗ тата Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуршӑлти «Шурӑ ҫӑл» юрӑ ушкӑнӗсем савӑнтарчӗҫ.

Конкурсантсене темиҫе номинаципе хакларӗҫ. «Кӗмӗл сасӑ-2016» фестивальте «Чи ҫепӗҫ саслӑ юрӑҫ» хисеплӗ ята Ҫӗрпӳ пики Елена Арсентьева тивӗҫрӗ. Чӑваш юррин пуянлӑхне уҫса паракан Улатӑр район хӗрӗ Мария Храмова пулчӗ. «Хӑйне евӗр ӑста юрлакан юрӑҫ» – Екатеринбург тӑрӑхӗнчен ҫитнӗ Артемий Тельцов. Вӑл Патӑрьел районӗнчи Пӑлапуҫ Пашьелте ҫуралса ӳснӗ. «Куракансем килӗштернӗ юрӑҫ» ята Эрӗнпур тӑрӑхӗнчи чӑваш каччи Александр Максимов ҫӗнсе илчӗ.

Пӗччен юрлакан юрӑҫсенчен пӗрремӗш вырӑна Пушкӑртстанри Ҫтерлӗ хулинчен килнӗ Карина Тимофеева тивӗҫрӗ. Иккӗмӗш вырӑна Пенза тӑрӑхӗнчи Неверкино районӗнчен килнӗ Виктория Серафимова тата Тутарстанри Аксу районӗнчи Анжелика Еремеева пайларӗҫ. Пӗччен юрлакан юрӑҫсенчен виҫҫӗмӗш вырӑна та иккӗн тивӗҫрӗҫ: Иркутск облаҫӗнчи Балаган районӗнчен килнӗ Инна Яковлева тата Муркаш район хӗрӗ Елена Филиппова.

Ытти ҫулхипе танлаштарсан кӑҫалхи фестивальре «иккӗн юрласси» номинаци те пулчӗ. Ушкӑнпа юрлакан юрӑҫсенчен пӗрремӗш вырӑна Шупашкар хулинчи Юлия Мокеевӑпа Павел Васильев, иккӗмӗшне Самартан килнӗ йӗкӗрешсем – Антонинӑпа Татьяна Сашинӑсем – тухрӗҫ. Виҫҫӗмӗш вырӑна Челябинск хулинчен килсе ҫитнӗ Артемипе Катерина Тельцовсем тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Чӑвашлӑхшӑн хыпса ҫунаканскерсем аякри Екатеринбург тӑрӑхӗнче Чӑваш наци культурипе автономине ертсе пыраҫҫӗ. 3 ывӑлпа 1 хӗр ҫитӗнтереҫҫӗ Тельцовсем. Ачисем те хӑйсем пекех юрраташша ӑста, сцена ҫине тухма тӗпренчӗкӗсем валли чӑваш тумӗ ҫӗлеттернӗ.

Чӑваш наци конгресӗн хастарӗсем конкурса килнӗ кашни ҫамрӑкӑн ӑсталӑхне палӑртма тӑрӑшрӗҫ. Ямал-Ненец автономи округӗнчен инҫе ҫула кӗскетсе килнӗ Виктория Иванова, Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи Екатерина Шепелева, Мурманскран ҫитнӗ Дина Агеева, Куславкка каччи Радий Чернов тата Шупашкар хулинчи Михаил Иванов дипломантсем пулса тӑчӗҫ. Тутарстанри Ҫӗпрел районӗнчи Матак ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Дина Агеева иртнӗ ҫул та фестивале хутшӑннӑччӗ. «Тӑван тӑрӑха кайса килме те вӑхӑт ҫук. Аттепе анне мана курма хӑйсем ҫитрӗҫ. Вӗсем халь залра лараҫҫӗ. Мурманскра йӗркеленнӗ «Акатуй» ансамбльте юрлатӑп. Пушӑ вӑхӑт пачах ҫук, кашни эрнерех гастрольсене ҫӳретпӗр. Ҫар чаҫӗсемпе туслӑ эпир, карапсем ҫинче чӑваш юррисем шӑрантаратпӑр. Пирӗн илӗртӳллӗ тум матроссене те тыткӑна илет», – ҫапла каласа кӑтартрӗ иртнӗ ҫул фестивальре виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑннӑскер.

Ҫӳллӗ шайра иртнӗ «Кӗмӗл сасӑ» фестиваль чӑваш чунӗллӗ ҫамрӑксенче пысӑк вӑй тапнине, чӑваш эстрада юррин пуласлӑхӗ пуррине кӑтартса пачӗ. Кӑҫалхи конкурсантсем пӗри теприн-чен вӑйлӑрах пулни сисӗнчӗ. Ҫӗнтерӳҫӗсене палӑртма жюрие, ахӑртнех, ҫӑмӑл килмерӗ.

Гран-прие тата ЧНК Президенчӗн парнине – тухьяна – Хӗрлӗ Чутай пики Наталья Соловьева ҫӗнсе илчӗ. Вӑл Вӑрманкас ялӗнчен. Кӗмӗл саслӑ 17 ҫулти пике «Шурӑ Атӑлта» юрра шӑрантарса куракансене те, жюрие те тыткӑнларӗ. Наташа Чӑваш патшалӑх педагогика университетӗнчи ӳнерпе музыка факультетӗнче пӗлӳ пухать. «Ача чухне урама тухса кинемисене темӗн тӗрлӗ юрӑпа савӑнтараттӑм. Мана хавхалантарса алӑ ҫупатчӗҫ. Садикре воспитательте тӑрӑшакан анне те юрра ӑста. Шкулта вӗреннӗ чухне районти конкурссене яланах хастар хутшӑннӑ эпӗ», – хӑйӗнпе паллаштарчӗ ҫӗнтерӳҫӗ. Сумлӑ конкурсра ят ҫӗнсе илни Наташӑна пурнӑҫ ҫулӗпе ҫирӗппӗн утма хавхалантарӗ. Ӑнӑҫу сунатпӑр ӑна!

**Елена АТАМАНОВА.**






КОНКУРС

# Сцена ӑстисене чысларӗҫ

**Пӗтӗм тӗнчери театр кунӗнче республикӑри «Чӗнтӗрлӗ чаршав» конкурса пӗтӗмлетесси йӑлана кӗчӗ. Кӑҫал 17-мӗш хут ҫӗнтерӳҫӗсене палӑртрӗҫ.**

ЧР культура министрӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлакан Константин Яковлев, ЧР Театр ӗҫченӗсен союзӗн председателӗ Геннадий Медведев режиссерсене, артистсене, ветерансене уявпа саламларӗҫ.

Пуш уйӑхӗнче жюри членӗсем тата куракансем кашни театрӑн ӗҫӗсене хак пачӗҫ. Тинех конкурсантсемшӗн чи пӑлхануллӑ самант ҫитрӗ.

«Ҫулталӑкри чи лайӑх спектакль /режиссура/» ята К.В.Иванов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗн «Вӗри юнлӑ ҫемҫе чун» спектаклӗ ҫӗнсе илчӗ. Ӑна СССР халӑх артисчӗ Валерий Яковлев сцена ҫине кӑларнӑ.

«Ачасем валли лартнӑ чи лайӑх спектакль» номинацире «Недоросль» камит /режиссерӗ Вячеслав Оринов/ мала тухрӗ. Ку ӗҫ – Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх ҫамрӑксен театрӗн репертуарӗнчен.

«Спектакльти чи лайӑх музыка» номинацире Андрей Галкин композитора ҫитекенни пулмарӗ. Вӑл «Муха-Цокотуха» спектакле /Чӑваш патшалӑх пукане театрӗ/ илемлетнӗ.

Вырӑс драма театрӗн артистки Оксана Ананьева «Безымянная звезда» ӗҫре хӗрарӑм сӑнарне чи лайӑх калӑпланӑ. ЧР тава тивӗҫлӗ артисчӗ Валерий Карпов «Вӗри юнлӑ ҫемҫе чун» драмӑра Константин Иванова вылять. Ӑна арҫын рольне чи лайӑх сӑнарланӑшӑн сцена ҫине чӗнсе кӑларчӗҫ.

«Эпизодри чи лайӑх роль» ята ЧР тава тивӗҫлӗ артисчӗ Сергей Алексеев тивӗҫрӗ. Вӑл Чӑваш патшалӑх оперӑпа балет театрӗ хатӗрленӗ «Любовный напиток» оперӑра Белькоре партине юрланӑ.

«Чи лайӑх сценографи» номинацире ҫӗнтерӳҫӗсене палӑртман.

Ҫакӑнпа чыслав вӗҫленмерӗ. Жюрин ятарлӑ парнине Татьяна Тойбахтинӑна «Любовный напиток» спектакльти Адина партишӗн пачӗҫ. ЧР Театр ӗҫченӗсен союзӗн дипломӗпе Чӑваш патшалӑх сӑнав театрӗн артисткине Лера Мешковӑна чысларӗҫ. Вӑл «Картинки дворика» спектакльти Йытӑ сӑнарне ӗнентерӳллӗ кӑтартнӑ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

ИНКЕК

# Хăрах çунатпа...

ТИСКЕРЛĔХ

## Тарăхнă...

**Красноармейски район сучĕ Элĕк районĕнче пурăнакан 58 çулти А.Афанасьев тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкернĕ, приговор йышăннă. Çын вĕлернĕшĕн унăн çирĕп режимлă колонире 10 çул ирттермелле пулĕ.**

Суд палăртнă тăрăх, 2015 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнче касхи 7 сехет тĕлĕнче А.Афанасьев хăйĕн машинипе ял хыçĕнчи хире тухнă. Унта хăйсен ялĕнчи пĕлĕшĕ К. тракторпа утă çулнă. Хăйĕнпе пĕрле айăпланакан автомашина салонне пăшал хунă.

Палăртнă вырăна çитсен



**Элĕк районĕнчи ку инкек пирки «Чăваш хĕрарăмĕнче» çырса пĕлтернĕччĕ. Тури Выла ялĕнче пурăнакан пĕр арçын теприне вĕлерни пирки Элĕк район прокурорĕ Эдуард Теклев хыпарланăччĕ.**

**Нумаях пулмасть редакцие çыру çитрĕ. «ЧХ» вулаканĕ /хăйĕн ятне палăртма хăю çитерейменскер/ вилнĕ арçын çемйи çинчен хаçатра çырса кăтартма ыйтать. Вĕсем çинчен хăй мĕн пĕлнипе паллаштарать. «Олег паттăрла вилмен, паллах, анчах арăмĕ Альбина çамрăклах тăватă ачапа тăлăха юлнă. Халĕ унăн хăрах çунатлă кайăк пек малалла талпăнмалла, ачисене пурнăç çулĕ çине тăратмалла...»**

**Тури Вылара пурăнакан Альбина Ксенофонтовăпа çывăхарах паллашас тесе эпир те Ураскилтри почта уйрăмне çитрĕмĕр: кăçалхи кăрлач уйăхĕнчен пуçласа хĕрарăм почтальонра тăрăшать.**

### Тăван ялтах...

Ксенофонтовсен тăватă ача. Кĕçĕнни Алеша вунпĕрмĕш класра вĕренет. Амăшĕн чы пысăк пулăшуçи вăл халĕ. Малтан вара ашшĕнчен пĕр утăм та юлман. Хăть те мĕнле пуçарăва та пĕрле явăçнă, çавăнпах мĕнпур ĕç патне алли пырать те. Тракторпа çÿреме те пĕлет вăл. Аслă ачисем пирки те çавнах каламалла. Шкулта лайăх вĕреннисĕр пуçне кил таврашĕнче пулăшмаллине те манман вĕсем. Халĕ виççĕшĕ те Шупашкар, Мускав, Красноярск хулисенчи аслă шкулсен студенчĕсем. Бюджет мелĕпех ăс пухаççĕ.

Олег та, Альбина та нумай ачаллă çемьере çуралса ÿснĕ. 1989 çулта паллашнă вĕсем. Альбина хĕр çумĕ пулса Олегсен ялне тусне качча пама пынă. Çакăнта сăнанă та пикене йĕкĕт. Кĕçех канмалли кунсенче каçсерен Мăн Шĕвĕше çул хывнă. Хĕр малтан – Шупашкарта, унтан Чулхулара вĕреннĕ-çке.

1991 çулта çĕнĕ çемье чăмăртаннă. Малтанах çамрăксем Чулхула облаçне те кайса пурăннă. Йĕкĕрешсем Андрейпа Артем унта çуралнă. Темиçе çултан кил хуçи тăван ялнех килес тенĕ. Çапла Ксенофонтовсем Тури Вылана тавраннă. Олег кĕçĕнни пулин те тĕп килтен уйрăлса тухнă вĕсем, 1996 çулта çырма урлă йывăç кивĕ пÿрт туяннă. Часах ăна çĕнетес тесе строительство материалĕсем пухма тытăннă.

Çурт хăпартма çăмăл мар. Кăна кашниех пĕлет. Ксенофонтовсем те çĕнĕ пÿрте часах кĕрейменн. Малтанах йĕри-таврари хуралтисене хăпартнă. Кайран çеç çурт купалама тытăннă. Юрать-ха патшалăх кăштах пулăшнă тата. Ялта пурăнакан çамрăк специалистсене тивĕçекен çăмăллăха Альбинăпа Олег çемйи те илнĕ. Анчах вăл та çитеймен. Майĕпен-майĕпен 2009 çулта çемье тинех çĕнĕ пÿрте кĕнĕ.

Малтанах мăшăр колхозра тăрăшнă, вылăх усранă. Арçын аякри хуласене те çÿресе курнă. Колхоз аркансан хресченфермер хуçалăхĕ те йĕркеленĕ Ксенофонтовсем. Çĕр арендăна илнĕ. Пурăнмаллаçке, ачисене те ÿстермелле. Ашшĕ пурне те аслă пĕлÿ пама ăнтăлнă. Ывăл-хĕрне сăпай та пултаруллă ÿстерме тăрăшнă.

### «Ывăл тавранмасăр ĕçместĕп»

Халĕ те картиш тулли выльăх усраççĕ Ксенофонтовсем. 4 ĕне, вунă ытла пăру. Малтанах вĕсен шучĕ тата пысăкрах пулнă-ха. Лашасем те темиçен тăпăртатса тăнă. Кил хуçи вилнĕ хыççăн урхамахсене сутма, ĕне йышне чакарма тивнĕ.

– Кĕçĕн ывăл нумай пулăшать. Пĕтĕм ĕçе пĕлет. Техникăпа та çÿрет, сварка та тăвать. Водитель профессине алла илме ĕмĕтленет. Выльăхĕсем те ĕçлемелĕх пур-ха. Хăшне-пĕрне сутрăмăр: ĕлкĕрейместĕн туйăнчĕ, ваккат тытма укçи-тенки те кирлĕ пулчĕ. Пĕлтĕр Олег лаçça та шыв кĕртсе панăччĕ. Мана канлĕрех, çăмăлрах пултăр терĕ ĕнтĕ...

Следстви вăраха пычĕ, çур çул ытла тăсăлчĕ, ĕçе судра кăрлач уйăхĕнче çеç пăхса тухрĕç. Сашăна 10 çуллăха хупрĕç. Саккунсем те тĕлĕнтереççĕ. Халĕ упăшка пирки ÿсĕр пулнă теççĕ, район хаçачĕ те çапла çырчĕ. Судья та çавнах калать – тухтăрсен справки çапла. Олег эрех ĕçмен çын пулман-ха, ялти ытти арçын пекех вăл та тепĕр чухне сыпкалатчĕ. Анчах та ун чухне ĕçместчĕ вăл. Андрейăн салтакран таврăнма вăхăт çитнĕччĕ. Пилĕк кун çеç юлнăччĕ. «Ывăл çаврăнса çитиччен ĕçместĕп, вăл килсен уявлăпăр», – тетчĕ, – ассăн сывлать Альбина Аполинариевна.

Пĕлтĕр çулла Ксенофонтовсем трактор валли роторлă косилка туяннă. Ытти ĕç хатĕрĕ те чылай вĕсен: сухапуç, ворошилка, пресс, копалка...

– Хире тухса савăнсах ĕçлетчĕ. Ирхине пиллĕкрех тăрса каятчĕ. Вĕçтерсе çитетчĕ те утă çулмаллине тавăрмаллипе улăштарса çакатчĕ. Утă çулма çĕртмен 13-мĕшĕнче тухрĕ те 19-мĕшĕнче перçе пăрахрĕç. Çынсем хăйсен çĕр пайĕсене черет тăрсах çултаратчĕç. 60 соткăна пин тенкĕпех çулатчĕ. Саша 200 тенкĕ ытларах ыйтатчĕ. «Çынсене мĕншĕн майран пăвас? Кун пек те çитет. 200 тенкĕпе мала каяс çук», – тетчĕ Олег. Çынсене ăнланатчĕ. Мĕн шухăшланине кусран тÿррĕн калатчĕ тата. Хамăр та çити-çитми пурнăçпа сахал нушаланнă-и? Халĕ çеç кăштах ура çине тăма пуçларăмăр.

Упăшка Саша кумăн тĕп конкуренчĕ пулса тăчĕ-тĕр. Олег пурнăçне татнăскер вăхăтĕнче пирĕн кĕçĕн ывăла тытнăччĕ. Анчах питех хутшăнмастăмăр эпир. Тĕл пулсан алă парса калаçса иртнĕ, анчах хире-хирĕç хăнана çÿремен. Арăмĕпе калаçаттăмăр-ха. Халĕ те сăмах чĕнмесĕр иртместпĕр. Эпир косилка илнишĕнех курайми пулчĕ-тĕр кум. Кăнтăрлах кăмăлсăр калаçнине çынсем илтнĕ. Каçхине акă персе те пăрахнă. Çурăмран пенĕ вĕт-ха... çурăмран... – кулянăвне пытармасть хĕрарăм.

Çула пуçтарăннă май чăваш хĕрарăмĕ çирĕп кăмăллă та вăйлă иккенне, инкекре те хуçăлманнине, малалла тинкерме хевте çитернине çырса кăтартас камăлпа тулнăччĕ. Анчах инкек темĕнле çирĕп кăмăла та аркатать. Çывăх çынна çухатнă хыççăн малалла пурăнма вăй-хал тупма çăмăл мар-тăр. Альбинăн куçĕ хальхаль шывланма хатĕррине кура малалла калаçтарма, иртнине аса илтерсе хĕрарăм чунне тата чĕрмелесе ыраттарма хевте çитереймерĕм. Вăхăт пур сурана та сиплет теççĕ. Редакци машинипе Шупашкара таврăннă май пуçра пĕртен-пĕр шухăш явăнчĕ. «Тури Вылара çын пурнăçне вак-тĕвекшĕнех татнă» тенине çула тухиччченех илтнĕччĕ-ха. Чăнласах çав 200 тенке пула вĕçленнĕ-ши ĕçчен арçыннăн ĕмĕрĕ? Питĕ шел... Укçа вăй илсе пыракан тĕнчере чун валли вырăн сахалланса пырать...

**Татьяна НАУМОВА.**

Автор сăнÿкерчĕкĕ.

АЙĂПЛАВ

# Ĕçнĕ те... манăçнă

**Тăвай район миравай судйи 41 çулти А.Иванов тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе пăхса тухнă.**

Палăртнă тăрăх, Иванов пĕлтĕрхи раштав уйăхĕн 4-мĕшĕнче пĕрле пурăнакан хĕрарăма çĕçĕпе хулĕнчен амантнă. Арçын хăйĕн айăпне туллин йышăннă. Хайхи хĕрарăмпа пĕрле ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ-мĕн, унтан сывăрма вырнă. Ăна полици ĕçченĕсем вăратнă. Çавăн чухне тин вăл урайĕнчи юна курнă имĕш. Хĕрарăм вăл ăна çĕçĕпе чикнине пĕлтернĕ. Çакна вăл ÿсĕр пулнăран ас туманнине, хĕрарăма ĕненнине каланă.

Хĕрарăм вара лару-тăрăва урăхларах сăнланă. Арçын хаяррине ĕçнĕ хыççăн ăна кĕвĕçме пуçланă. Хĕрарăм вырăн çинче выртнипе усă курса ăна аллинчен ярса тытнă та çĕçĕпе амантнă. Хĕрарăм пÿртрен тухса тарма, пулăшу ыйтма пултарнă. Кÿрши хĕрарăма пĕрремĕш пулăшу панă, полици чĕннĕ.

А.Иванов уголовлă майпа малтан та айăпланнă. Ун чухне вăл çак хĕрарăмах çĕçĕпе майĕнчен амантнă. Айăплав вăхăчĕ иртнĕ ĕнтĕ.

Ĕç-пуçа тишкернĕ хыççăн суд Иванова айăплă тесе йышăннă. Ял тăрăхне тирпей-илем кĕртес тĕлĕшпе унăн 200 сехет ĕçлесе юсанмалла пулĕ.

Приговор епле пурнăçланнине ятарлă инспекци тĕрĕслĕ.

**Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай район прокурорĕ.**

# Кредитшăн – виçĕ пурнăç

**Шупашкарти Ленин районĕнчи следстви уйрăмĕ 24 çулти хĕр тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерсе пĕтернĕ. Ăна виçĕ çынна чиксе вĕлернĕшĕн айăплаççĕ.**

Следстви версийĕ тăрăх, çамрăк хĕр банк умĕнче парăмра пулнă. Çавăнпах укçа-тенкĕ çитменнипе асапланнă вăл. Асламăшĕпе аслашшĕн укçа аванах пухăннине пĕлсен пĕлтĕрхи çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнче вăл тăванĕсем патне хăнана пынă. Аслашшĕ лавккана тухсан хĕр 76 çулти асламăшне çĕçĕпе сахалтан та 11 хутчен тĕрлĕ çĕртен чикнĕ.

Пĕр хушăран кунтах хăнана 54 çулти амăшĕ те кĕнĕ. Хĕр ăна та тапăннă. Ун хыççăн тавранăнă 80-ри аслашшĕне те хĕрхенмен. Малтанхи çĕçĕпех вĕсене тĕрлĕ çĕртен 20 тата 23 хутчен чикнĕ. Суранcене пула тăванĕсем вырăнтах вилнĕ.

Кун хыççăн хĕре чăрмантаракан текех пулман. Вăл хваттере пĕтĕмпех тустарса тухнă та 125 пин тенкĕ тупнă. Ку укçана илсе вырăнтан сухалнă.

Ĕç-пуçа уçăмлатас тĕллевпе 15 çынран ыйтса пĕлнĕ, 20 ытла суд экспертизи ирттернĕ следовательсем.

Психиатри экспертизи кăтартнă тăрăх, хĕр хăй мĕн тунине те, хаярлăхне те, обществошăн хăрушлăх кăларса тăратнине те ăнланмасть. Ăна психиатри больницинче вăйпах сиплеме сĕннĕ.

Следовательсем материал çитеlĕклех пухса çитернĕ, ăна район судне ярса панă.

**А.ШАРИН,**
**Шупашкарти Ленин районĕн следстви пайĕн ертÿçи.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Нут кăлпассийĕ

**1 стакан нут, 50 миллилитр тип çу, 1 хĕрлĕ кăшман, 2 шăл ыхра, 1 чей кашăкĕ тăвар, чĕптĕм авăртнă мускат мăйăрĕ, хура пăрăç, кардамон кирлĕ.**

Нута 6-8 сехет шÿтермелле, шыва улăштарса çемçеличчен пĕçермелле.

Хĕрлĕ кăшмана теркăламалла, сĕткенне пăчăртаса кăлармалла. Ыхрана вĕттĕн турамалла.

Вĕри нута, ыхрана, хĕрлĕ кăшман сĕткенне, тип çăва, тăвара, техĕмлĕхе блендерпа пăтратмалла. Нимĕре пластик кĕленчене ярса 30-60 минутлăха сивĕтмĕше хумалла.

Хатĕр кăлпассие кĕленчерен кăларса çаврашкан касмалла.

### Халва

**170 грамм арахис, 1/3 стакан сахăр, ванилин, 100 миллилитр шыв, 50 миллилитр тип çу, 1/3 стакан çăнăх, 1 апат кашăкĕ какао, тасатнă 1/2 стакан хĕвелçаврăнăш вăрри, 1/3 стакан кунжут кирлĕ.**

Духовкăра типĕтнĕ арахиса блендерпа вĕтетмелле. Сахăр, ванилин хушнă шыва 5 минут вĕретмелле, тип çу ярса тепĕр 1 минут пĕçермелле.

Çăнăха çатмара ăшаламалла. Ăна какаопа, мăйăрпа хĕвелçаврăнăш хутăшĕпе пăтратмалла. Çак хутăша сиропа ямалла. Хатĕр формăна халва тултармалла, тĕпне те, çиелтен те кунжут вăрри сапмалла.

### Кальмар салачĕ

**150 грамм кальмар, салат çулçи, 2 редис, черри ыйшши 2 помидор, 1 пылак пăрăç, 1 стакан кунжут вăрри, 100 грамм купăста, 6 апат кашăкĕ олива çăвĕ, уксус, тăвар кирлĕ.**

Кальмара 3 минутлăха вĕрекен шыва ямалла. Сивĕнсен тасатса çаврашкан касмалла. Кунжут вăррине типĕ çатмара ăшаламалла. Салат çулçине алăпа татмалла. Пылак пăрăça – пĕрчĕлесе, редиса – çаврашкан, купăстана вĕттĕн турамалла. Помидора 4 пая касмалла. Çимĕçсене, кальмарсăр пусне, уксуспа, олива çăвĕпе пăтратмалла, тăвар сапмалла. Çиелтен кальмар çаврашкисене хумалла.

### Хуратулпа купăста

**1 стакан хуратул кĕрпи, пуçлă 2 сухан, 2 кишĕр, симĕс сухан, 300 грамм купăста, авăртнă 1/2 стакан аçтăрхан мăйăрĕ, тăвар, олива çăвĕ кирлĕ.**

Хуратул кĕрпине пĕçермелле. Теркăланă кишĕре олива çăвĕпе ăшаламалла. Сухана, купăстана вĕттĕн турамалла.

Хуратул кишĕрпе, суханпа, купăстапа, мăйăрпа пăтратмалла, тутă кĕртме тăвар сапмалла.

### Хăйма кексĕ

**1 стакан сахăр, 3 çăмарта, 3 апат кашăкĕ хăйма, 1/2 стакан тип çу, 1 пакет кăпăшлантаракан хутăш, ванилин, 1 стакан çăнăх кирлĕ.**

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, хăйма, тип çу, ванилин, çăнăх, кăпăшлантаракан хутăш ямалла. Чустана силикон савăта тултармалла. Кекса духовкăра 20 минут пĕçермелле.

### Шăккалат кукăлĕ

**4 апат кашăкĕ çăнăх, 3 апат кашăкĕ сахăр, теркăланă 30 грамм шăккалат, 2 апат кашăкĕ какао, 1/2 чей кашăкĕ кофе, 1 çăмарта, 3 апат кашăкĕ сĕт, 1 апат кашăкĕ тип çу, ванилин, 1/2 чей кашăкĕ кăпăшлантаракан хутăш, услам çу кирлĕ.**

Çимĕçсене хутăштарса шĕвĕ хăйма майлă чуста çăрмалла. Кукăле микрохумлă кăмакара 3-4 минут пĕçермелле. Вăл мороженăйпа уйрăмах тутлă.

### Печени

**Чуста çăрма 2 стакан çăнăх, 250 грамм маргарин, пĕçернĕ 4 çăмарта сарри, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, 4 апат кашăкĕ хăйма кирлĕ.**

**Çиелтен витме 3-4 апат кашăкĕ какао, 2 стакан сахăр, 1 стакан сĕт хатĕрлемелле.**

Маргарина хăймапа пăтратмалла, вĕтетнĕ çăмарта сарри, çăнăх, апат соди хушмалла. Чустаран аçтăрхан мăйăрĕ пысăкăш çаврашкасем тумалла. Печение духовкăра 15-20 минут пĕçермелле.

Какао, сахăр хушнă сĕте 3-4 минут вĕретмелле. Хатĕр печение çак хутăша чиксе кăлармалла.

СЫВЛĂХ

## Вар-хырăма пылпа сиплетпĕр

Хырăмлăх /гастрит/ аптратсан ăна пылпа сиплеме сĕнеççĕ.

- 1 литр ăшă шывра 150 грамм пыл ирĕлтермелле. Ăна 4 пая уйăрса кун каçа ĕçмелле. Пĕрне ирех – выçăлла, теприне – çывăрас умĕн. Пыллă шыва малтан ăшăтмалла, унсăрăн витĕмĕ сахалрах пулĕ. Сиплев курсĕ – 1 уйăх.
- Кунне 4 хутчен пĕрер чей кашăкĕ пыл çисен те юрать, ăна та ăшă шывпа сыпмалла. Пĕрремĕш тата юлашки кашăксем ирпе вăрансан тата çывăрма выртиччен пулмалла. Кун пек мелпе те 30 кун сиплenмелле.
- Алоэпе. 200 грамм пылпа 200 грамм 5 çултан кая мар ÿснĕ алоэ çулçи кирлĕ. Чечек çулçине малтанах 3 кун шăнтмăшра тытмалла. Пыла шыв мунчинче ирĕлтермелле, вĕреме кĕрсен аш арманĕ витĕр кăларнă алоэ ямалла, пăтратса тăнă май 3 минут вĕретмелле. Кĕленче савăта тултарса сивĕтмĕшре упрамалла. Ирпе выçăлла тата çывăрас умĕн 2-шер апат кашăкĕ, апат умĕн пĕрер апат кашăкĕ ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 3 эрне. 1 эрне иртсен тепĕр хутчен пуçлама юрать.
- Сĕтпе. Кашни ир выçă хырăмла 2 апат кашăкĕ пыл ярса 1 стакан сĕт ĕçмелле. Вар-хырăм хытах ыратать тăк кун каçа пĕчĕкшер сыпкăмсем тумалла, 1 литртан кая мар ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 3 эрне.
- Салтак тÿмипе. Шыв мунчинче 100 грамм пыла ирĕлтермелле те 1 апат кашăкĕ салтак тÿми хушмалла. Хупăпа витсе 10 минут вĕретмелле. Ун хыççăн 1 литр шывпа хутăштармалла, лайăх пăтратса сăрăхтармалла, кĕленче савăта тултарса сивĕтмĕше лартмалла. Ирхи апат умĕн 1 сехет маларах 1 стакан ĕçмелле, кун каçа кашни апат умĕн 1/3 стакан, çывăрас умĕн 1 сехет маларах 1 стакан ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 2 эрне.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

## Ăшă йăран

Ăста пахчаçăсем çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнчех хăяр çиме тытăнаççĕ. Вăрттăнлăхĕ – ăшă йăранра. Ăна хатĕрлеме йăран варрине пĕр кĕрепе çурă тарăнăш чавмалла. Унăн виççĕмĕш пайне пахчари пĕлтĕрхи çÿп-çаппа, утă-улăмпа тултармалла. Унтан тислĕк хумалла. Вăл та пĕлтĕрхи пулсан аванрах. Кĕл сапмалла. Нитроаммофоска им-çамĕ пулсан та пăсмасть. Çиелтен 10-15 сантиметр çĕрĕк тăпра хумалла. Урăххи çук тăк йăран çинчи те юрать. Калчана куçариччен çĕре çатăркапа витсе ăшăтмалла.

Ака уйăхĕн варринче калча тума хăяр акма та юрать. Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче ăна йăран çине куçармалла.

## Бальзамин

Çак ÿсен-тăран нÿрĕк юратать. Сахал шăварсан çулçи çиййĕнчех шанма пуçлать. Тĕрлĕ тĕслĕ çурăлать вăл. Ку чечеке çутта лартмалла. Хĕлле хĕвел лекекен вырăнта хăйне хătлă туять çак ÿсен-тăран. Çапах та çулла хĕвел пайăркисем ăна çунтарса яма пултараççĕ. Çуркуннерен кĕркуннеччenех чÿлмекри тăпра нÿрĕ пулмалла. Хĕлле чечеке сахалрах шăвармалла. Унăн çулçисене шывпа тăтăш пĕрĕхмелле. Астăвăр: батарей çумĕнчи типĕ сывлăша пула бальзамин типсе ларать.

ЫЙТУ-ХУРАВ

## Курăк акмалла

**Выльăх-чĕрлĕх усрама пăрахнăран килте тислĕк çук, çĕре унпа тутлăхлатаймастпăр. Çĕрулми туса илмелли лаптăка минерал мĕнле им-çамĕпе лайăхлатмалла-ши? Пирĕн пахча тăмлăрах. Кĕркунне тата çуркунне калиллĕ, фосфорлă, азотлă минерал им-çама пĕр сотка çĕр çине алă вĕççĕн миçе килограмм сапма юрать-ши?**

**А.Н. СМИРНОВ.**
Елчĕк районĕ.

Минераллă им-çам витĕмлĕ пултăр тесен ăна органика им-çамĕпе пĕрле усă курмалла. Органика /тислĕк/ çук тăк тăпрана хамăр алăпах лайăхлатма пулать. Сăмахран, сидерат – тăпрана паха япаласемпе тулăхлатакан курăк – акмалла. Ку тĕллевпе икĕ çул хăрăс пахчан пĕр пайне илепер /донник/ акма юрать. Ку курăк утă тума та аван. Çулла ăна çулса типĕтмелле, кĕркунне вара симĕсскерне сухаласа тăкмалла.

Пахчан тепĕр çуррине çĕрулми лартма хатĕрленнĕ май çуркунне комплекслă им-çам /нитрофоска, нитроаммофоска, азофоска/ сапсан аван.

Минераллă им-çама 1 гектара 300 килограмм таран сапма юрать, 1 соткăна 3 килограмм тухать.

**Олег ВАСИЛЬЕВ,**
**Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн биотехнологипе агрономи факультечĕн профессорĕ.**

## Хур çемйине çĕнетмелле

**Виçĕмçул хур амине 10 çăмарта хурса патăмăр, 5 чĕпĕ пусса кăларчĕ. Пĕлтĕр 3 çăмарти çеç чĕпĕллĕ пулчĕ. Хур çемйине улăштармаллаччĕ-ши? Эпир вара çамрăк пĕр ама кăна хушрăмăр.**

**Лариса С.**



Пурне те улăштарсан лайăххах паллах. Май пулаймасан урăх аçа илмелле. Юттине илсе килсен лайăххах, мĕншĕн тесен тăвансене пĕтĕçтерсен хавшак чĕпĕ çуралать.

3 çулта пĕрре хур аçине улăштармалла, вара вĕсен çемйи тĕреклĕ пулать.

## Лайăх им-çам

**Кролик каяшĕ усăллă-и? Унпа мĕнле усă курмалла?**

**Иван М.**

Кролик каяшĕ – лайăх им-çам. Ăна йăран чавнă чухне 10 тăваткал метра 20-30 килограмм хурса хăварма юрать. Тислĕк купинче те лайăх çĕрет вăл. Кролик каяшне шыва ярса йÿçĕтмелле /1 килограмм каяш пуçне 10 литр шыв кирлĕ/. 10 тăваткал метр çĕре 5-6 литр çав хутăшпа шăвармалла, вара çакăнти пахчаçимĕç парка çитĕнĕ.

## Сысна çурине пулăшма

**Сысна çури шăл туни кĕçĕтнипе нушаланать. Ăна мĕнле пулăшмалла-ши?**

**Вера Ф.**

Сысна çурине чăмлаттармалла. Шăтарнă урпа ăшаласа пама пулать. Вăл кĕçĕтнине те иртерет, пĕчĕкскерĕн организмне В ушкăнри витаминсемпе те çирĕплетет.

Ку апата çаплă хатĕрлемелле: урпана темиçе сехетлĕхе ăшă шывра йĕпетмелле. Унтан ăна пир çине сарса хумалла. Типесрен шывпа пĕрĕхсех тăмалла. 3-4 кунран шăтма пуçлать вăл. Урпана ылтăн тĕс çапиччен духовкăра тытмалла. Сысна çури ку апата килĕштерсех çиĕ.

ТĔКĔР УМĔНЧЕ

- Вилкăпа çемçетнĕ банана 1 чей кашăкĕ тип çупа, 1 çăмарта саррипе пăтратмалла. Çак хутăша пите сĕрмелле. 20 минутран ăте малтан ăшă, унтан сивĕ шывпа çуса тасатмалла. Ку маска ÿте лăплантарать, тутлăхлантарать, хĕрелнине иртерет.
- 1 апат кашăкĕ олива çуне 1 çăмарта саррипе, 0,5 чей кашăкĕ минерал шывĕпе пăтратмалла. Çак хутăша мамăкпа пите сĕрмелле. 15 минутран сивĕннĕ симĕс чейпе çăвăнмалла. Ку маска сăн кĕртет, пите якатать.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Ашшĕн ывăлĕ

Эпĕ умлă-хыçлă хĕр çуратрăм. «Вăт маттур тăк маттур», – хырăм мăкăрăлса тухнине курсанах пĕлĕшсем манпа калаçу пуçараççĕ. Ăна хам та пĕлетĕп. Тĕпренчĕке ура çине тăратма укçа та, вăй та, чăтăмлăх та кирлĕ. Ывăл шыраса нумай ачаллă çемьесен йышне кĕтĕмĕр.

Тинех упăшкан ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Тĕрĕссипе, хăçан та пулин алла арçын ача тытса курасса хам та шанман. Кур-ха – пултартăм. Телейлĕ те пуян халĕ эпир.

Ача çуратмалли çуртран ывăлăмпа иксĕмĕре пысăк йышпа илсе тухрĕç. Упăшка çывăх тăванĕсене чĕнсе илнĕ. Пурте саламларĕç, пирĕнпе пĕрле савăнчĕç.

Çемйипех ывăл тавра чупкалатпăр. Патша вырăнĕнчех кĕçĕнни пирĕншĕн. Ара, вăл – йăх тăсакĕ, кил тĕпкĕчĕ-çке. Çавна май алла хăвăртах вĕренчĕ



пĕчĕкскер. Кравать çинче те выртасшăн мар. Йăтса илмесен кăшкăрать тăк кăшкăрать – çурт стени те чĕтреннĕн туйăнать.

Пуринчен ытла ăна упăшка шеллет. «Мĕншĕн йĕртетĕр? Ачана лайăх пăхăр», – тет. Кил хуçи хĕрĕсемпе ун чухлĕ вăхăт ирттернине ас тумастăп. Ывăлне юмах вуласа парать, унпа пĕрле вылять. Пĕчĕкскерне кивелнĕ кĕпе-йĕм тăхăнтарнăшăн та кăмăлсăрланать ашшĕ. «Ачасене çыпăçуллă тумлантармалăх ĕçлесе илейместĕп-и?» – сассине хăпартсах калать хайхискер. Хĕрсем валли ытлашши тем те пĕр туянман-ха та. Юрать, илĕпĕр, халĕ лавкка сентрисем япалапа йăтăнса тăраççĕ. Çакăншăнах чĕрре кĕрес килмест упăшкапа.

Тинтерех ывăлăм чирлерĕ: кĕлетке температури хăпарчĕ, ÿсĕрме пуçларĕ. Тухтăр ачана шĕвек ытларах ĕçтерме сĕнчĕ. Килте шăн çырлапа компот вĕретнĕччĕ-ха. Упăшка улма-çырла сĕткенĕ туянма лавккана чупрĕ. Вăт ăшталанать! Сĕткене ещĕкĕпех йăтса килчĕ. «Ку пĕтсен татах илĕпĕр», – кăмăлĕ лайăх унăн. Ывăлăм аллине тăсса: «Пар», – теме вĕренчĕ. Çĕрле вăранса кăшкăрса ярать. Малтан кăкăр çитерсе лăплантараттăм. Халĕ сĕткен кăна кирлĕ ăна.

Пĕчĕкскер чеелемме хăнăхрĕ. Ашшĕне курсанах кутăнлашма пуçлать: те тетте, те апат кирлĕ ăна? «Ача пăхасси – сирĕн тĕп тивĕç...» – пуçлать вара çемье пуçĕ пире ăса вĕрентме. Ахаль те ун çумĕнчен пăрăнмастпăр.

Кĕçĕннине ытлашши иртĕхтерме юраманнине ăнланатăп-ха. Кăшт çитĕнтĕр те ашшĕпе пĕрле кил таврашĕнче ĕçлеме хăнăхтăр. Ачаш ывăл мар, чăн-чăн пулăшакан пултăр вăл.

Унччен... Акă упăшка васкаса килни курăнать. Ывăлăма сĕткен уçса ĕçтерем-ха. Тĕпренчĕкĕн кăмăлĕ тулнине курса хĕпĕртетĕр.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

АХ, АНЧАХ...

# Хытăрах юратмаллаччĕ...

Венера качча тухмасăрах хĕр çуратрĕ. «Ачана пĕччен çитĕнтерĕп», – хăйне хăй сăмах пачĕ вăл. Çирĕп тытрĕ тĕпренчĕкне хĕрарăм: тантăшĕсемпе выляс вырăнне хĕрача валли килте ĕç тупăнсах тăчĕ. Каçсерен клуба та кăлармарĕ амăшĕ хĕрне.

Пахчаçимĕçпе сĕт-турăх сутма кашни кунах пасара хутларĕ хĕрарăм. Тенкĕ çумне пус хушма хăнăхнăскер ытлашши пĕр япала та илмерĕ. Çăкăр касăкĕ те шутлă унăн килĕнче. Кивелнĕ çуртне юсаса çĕнетмелле те – нухратне шеллет вăл. Хĕрĕ хитре тумланасшăн, анчах çыпăçуллă çи-пуç илсе парасшăн мар ăна амăшĕ. Тĕпренчĕкне хăй пекех перекетлĕ пурăнма хăнăхтарасшăн та, çук, укçана хытă тытма вĕрентеймест.

Пурлăх çинчен шухăшласа çĕрле те канлĕ çывăраймасть Венера. «Ĕнер пуçтарăннине ăçта хунăччĕ-ха? Ыранах банка леçес пулать. Унта типтерлĕ упранать укçа-тенкĕ», – каллех ыйхă вĕçнĕ унăн.

Çынсем хуларан автобуспа туххăмрах киле çитеççĕ. Венера çуранах таврăнма хăнăхнă. «Ура утнă чухне мĕншĕн тăкакланмалла?» – тет вăл хăйне хÿтĕлесе. Çумăр та, çил-тăвăл та ним те мар уншăн.

Ăш хыпнине квас ĕçсе ирттерет халăх. Перекетлĕ сутуçă вара яланах шыв чиксе çÿрет. Хырăмĕ темле хытă выçсан та столовăй алăкне пырса тытмасть. Хытă çăкăр чĕллипе çиме кăлпасси илесчĕ те... Вăл лавккари хăш сентре çинче выртнине те пĕлмест хĕрарăм. Килти аш-пăш та, çăмарта та – çын валли.

Никама та кивçен парса курман Венера. «Хăвăра пурăнмалăх ĕçлесе илейместĕр-и?» – унăн ялан пĕр сăмах.

Ĕçкĕ-çике те хутшăнман, киле хăна та чĕнмен ытла перекетлĕскер. Ĕмĕр иртнине те сисмерĕ вăл. Банкри укçи-тенки ахалех пĕтнишĕн хытах пăшăрханчĕ. «Вилсен пĕтĕм мула хĕрĕме парса хăвараттăм», – терĕ кулянса ял-йыша.

Хĕрĕ качча тухса кайрĕ те амăшĕ патне килсе те курăнмарĕ. Сутă тăвас тесе тĕпренчĕкне ачашлама вăхăт та пулман хĕрарăмăн. Хĕрне, пурнăça хытăрах юратмалла пулнă та...

Ватăлса вырăнпа выртма пуçласан çамрăк ĕмĕр тăтăшах аса килчĕ ăна. Петĕр вăйăран ăсататчĕ чипер Венерăна. Иккĕшĕ ĕмĕрĕмĕр пĕрле пулма ĕмĕтленетчĕç. Анчах çывăх çыннисен сăмахĕнчен иртеймерĕ яш: арăм тума урăххине суйларĕ. Кайран ыттисене яхăнне те яман пĕчĕк ачаллăскер.

Хăй арçын тĕрекĕсĕр пурăнчĕ, хĕрĕн ашшĕ пулман. Тĕнче те курман, тăраниччен апат та çимен мăнтарăн хĕрарăм...

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

ЭХ, ÇАМРĂКЛĂХ...

# Кушак вырăнне – чĕрĕп

Ĕçтешĕмсен хушшинче качча кайманни – эпĕ кăна. Ытти уйрăмра çамрăксем татах та пур-ха, анчах манпа пĕрле хĕрĕх урлă каçнисем ĕçлеççĕ. Пĕр енчен кăсăклă та вĕсемпе: темĕн те пĕлеççĕ, хăть те хăçан та сĕнÿ-канаш тупăнать упăшкаллăскерсен. Уйрăмах пĕр-пĕр каччăпа тĕлпулăва пуçтарăнсан кашни пиллет. Тепĕр енчен тинкене кăлараççĕ пуль – çине тăрсах качча тухма сĕнеççĕ, «ватă хĕр» ята илтесрен шикленеççĕ. Эпĕ вара васкамастăп-ха. Çирĕм пиллĕкре çеç-çке – пĕтĕм пурнăçăм малашлăхра.

Тепĕр тесен, ăçта васкамалла? Халĕ эпĕ хама ирĕккĕн пурăнатăп. Çиес килет – пĕçеретĕп, канас тесен – выртатăп. Куншăн упăшка та кÿренмест, хуняма та кăмăлсăрланмасть. Паллах, ĕмĕре пĕччен ирттерме çук. Кайăк та йăва çавăрса чĕпĕ кăларать. Çемьере туслă пурăннипе нимĕн те танлашаймĕ. Анчах качча тухни килĕшÿпе çураçура пурăнасса та çирĕплетмест-ха. Темшĕн-çке малтан çемçе кушак пулнăскерсем те мăшăрлансан чĕрĕпе çаврăнаççĕ.

Акă мана качча тухма хистекен ĕçтешĕмсенех илер. Вĕсем те юратсах пĕрлешнĕ, анчах халĕ килĕнче кашнин хăйĕн «вăрçă». Пĕри çирĕм çула яхăн пĕрле пурăнса мăшăрне хура нускине ăçта хумаллине вĕрентсе çитереймен, теприн апат çиме телевизор умне вырнаçать. Киревсĕр йăлапах танлаштармалла кăна. Апатланма уйрăм пÿлĕм те, сĕтел те пур, мĕншĕн тĕпретсе çÿремелле? Кун пек йăла мана та вĕчĕрхентерĕччĕ.

Верук, сăмахран, упăшкине шанмасть. Ăна кĕвĕçнĕренех мĕн чухлĕ вăхăт вĕчĕрхенмест пуль. Мăшăрĕ килне час таврăнманнине, телефонпа вăрттăн калаçнине каласа мĕн чухлĕ йĕмест пуль! Эпир – итлекеннисем, лăплантараканĕсем. Мăшăрĕн ялан пĕр хурав: ĕçре те ĕçпе.

Таньăн вара аякри хулана ĕçлеме çÿрет. Таврăнсан эрнипе урăлмасть. Кун пеккипе мĕн тумалла тет тата?

Нинăн хыткукар. Чăннипех те хытă. Хăйĕнне хĕсни çитмест, арăмĕнне те шутлама хăтланать тата. Çĕнĕ кĕпе туянсан та хакне кăларса кăтартма тивет имĕш.



Çине-çинех мĕн те пулин илсе тăхăн-ха – кăшласа ярать. Çавăнпах тĕрлĕ крема та Нина вăрттăн туянать, хăшне-пĕрне ĕçрех упрать. Вăт сана камит – чиперрине юратаççĕ арçынсем, анчах капăрланма ирĕк памаççĕ!

Ленăн апат тиркет. Мĕн таран тутлă апат-çимĕç хатĕрлет арăмĕ, пире те час-часах хăналать. Упăшки пур тутине пăрать. Иртĕхнĕ-ши? Мăшăрĕ пĕçернине кура йĕкĕлтет-ши? Лена арçыннăн ку йăла авланиччененех пулнине калать. Анчах çакă вăхăт иртнĕ май иртессе шаннă иккен вăл.

Машăн хĕрĕхе çитет пулин те канмалли кунсенче тусĕсемпе каçхи клубсене çÿрет. Ташласси килет имĕш. Ниепле те тытса чараймасть ăна Маша. Уйрăлма та тытăнчĕ – ачине хĕрхенчĕ. Пепке чирленĕ хушăра упăшка савăнма тухса утни хăть те мĕнле вăйлă хĕрарăма та кÿрентерĕ. Камăн хăйне хисеплеттерес килмĕ?

Вальăн вара... алă çĕклет. Мăнтарăн ĕçе те чĕрмĕк питпе килет хушăран.

Пурин упăшки çинчен те пайăррăн каласа та пĕтереймĕн. Пĕрин савмасть, теприн пушмаккине çуса лартмасть, ачисемпе вылямасть, тăванĕсемпе хутшăнмасть... Кашни ĕçтешĕм мĕнпе те пулин кăмăлсăрланатех. Вĕсене итленĕ май хушăран качча тухас ĕмĕтĕм вуçех пăчланать. Принцсем çуккине пĕлетĕп-ха, анчах лайăх савни тупас килет-çке. Тепĕр чухне çак ĕмĕтĕм те тÿпери çăлтăр пек туйăнать. Çук-шим идеал шайне çывхараканни? Чăн таса туйăмпа савса килĕштерсе пурăнас килет-çке.

**АННА.**

# ӲРМЕК Ваҫли

# Сӗмсӗр

### Телеспектакль

(Малалли. Пуҫламӑшӗ 5-11 номерсенче).

**КӖҪТУК.** Ахальтен мар сире «уй чӑвашӗсем» теҫҫӗ. Мӗн аташса каймалли пур унта, вунӑ-вунпилӗк минутран эпир пӗве хӗрринче пулатпӑр. Атьӑр, кайрӑмӑр... */Ушкӑн шавласа Кӗҫтук хыҫҫӑн вӑрмана кӗрсе ҫухалать. Тем вӑхӑтран Наҫтук курӑнать/.*

**НАҪТУК.** Уй! Ӑҫта тарса пытаннӑ кусем, апат вӑхӑчӗ те ҫитеймен-ха... */Вӑрмантан Илле сасси хӑрушла илтӗнет/.*

**ИЛЛЕ.** Эп хӑратӑп! Хӑратӑп-ӑп!.. */Чӑсах пурте хашкаса-хӑраса чупса тухаҫҫӗ. Хыҫалта Кӗҫтук аран-аран ӗлкӗрсе пырать/.*

**КӖҪТУК.** Кам ҫынни пулчӗ-ши вӑл? Халь мӗн тӑвӑпӑр?

**ПӖРИ.** Ҫӗҫӗпе чиксе вӗлернӗ вӗт, тата ҫӗҫҫи те чикнипех... хырӑмӗнчех...

**ТЕПРИ.** Алли юнлӑ пекчӗ... хӑйне хӑй чикмен-ши?

**КӖҪТУК.** Вӑт, вӑт, эпӗ те ҫапла шухӑшлатӑп... */Наҫтука курать те пуҫне айккинелле пӑрать/.*

**НАҪТУК.** Кам, мӗн вилли пирки ҫуйхашатӑр эсир? Тата мӗн тума кайнӑ эсир вӑрмана?

**ИЛЛЕ.** Пире ак, Кӗҫтук, Костя Романов шыва кӗме ертсе кайрӗ тӳррӗн, вӑрман урлӑ...

**НАҪТУК** */Костьӑна аса илнӗ пек пулса/.* Костя Романов...

**КӖҪТУК.** Сывах-и? Настень... Настя?

**НАҪТУК** */асӑрханулла/.* Сы-ывах-ха...

**ИЛЛЕ.** Ку виле пирки Гурий Андреевича хальтерех пӗлтерес пулать. Вӑл кунти ҫын, паллама кирлӗ.

**КӖҪТУК.** Тӗрӗс... Тата полицие те шанкӑравлас пулать...

**ИЛЛЕ.** Мана тем, инҫех те мар лаша кӗҫенсе илнӗ пек туйӑнчӗ...

**КӖҪТУК.** Эй, катемпи, сан хӑлху шӑхӑрмасть-и?

**Вунсаккӑрмӗш курӑну**

*Ҫывӑхрах лаша тулхӑрать. Ҫавна сиссе-илтнипе Михали тӑна кӗрет. Нӑйкӑшкаласа валашка айӗнчен хирӗнкелесе тухать.*

**МИХАЛИ.** Ай, ман лаша... кунтах-ҫке. Турӑ пурах, Турӑ пурах, ман вилмелле мар халех... */Ухмаха ернӗ евӗр/.* А-ха-ха-ха-а! */Сулланкаласа ура ҫине тӑрать, туйи ҫине таянса лаша еннелле утать, урапа ҫине ахлата-ахлата хӑпарса ларать/.* Атя, кайрӑмӑр! Т-пр-р! Тӑхта!.. Мӑйран ҫакнӑччӗ-ҫке-ха... Ӑҫта ман укҫа енчӗкӗ? А-а, лешсем ӑҫта? Тарса ҫухалнӑ ӗнтӗ, хӑравҫӑсем, мӗскӗн хавшаксем... Эп пӗччен сӗтӗрнӗ ӑна, вӗсем иккӗн хураймаҫҫӗ... Тьху, иттит-кутрит!.. Хӑйпашкасем... вӑрӑсем... Ну-ну... лекӗр-ха ман аллӑма... Но-о, атя, кайрӑмӑр...

**Вунтӑххӑрмӗш курӑну**

**ТЕППИ** */аран-аран хуҫлана-хуҫлана хӑйпе хӑй пуплесе урам тӑрӑх анать/.* Ай, темӗн ан пултӑрччӗ, тем хырӑмра питӗ касать...

**ИЛЛЕ** */хирӗҫ килет/.* Степан Тимофеевич, мӗн пулнӑ сире? Сӑнран та шуранкӑ пек... тарласа кайнӑ тата...

**ТЕППИ** */йывӑррӑн/.* Тем шӑм-шак сурать, хырӑм та каса-каса килет... Кӗҫӗр хурала та тухайрас ҫук пулӗ...

**ИЛЛЕ.** Теппи мучи, эс хӑвӑртрах больницӑна кай, Гурий Андреевич хӑех машинипе леҫсе хӑварӗ.

**ТЕППИ.** Хуралне вара?..

**ИЛЛЕ.** Эпӗ каятӑп, хирӗҫлеместӗн-и?

**ТЕППИ.** Ай, ҫамрӑк тусӑм, тавах сана. Ме, тыт пӑшал. Ан хӑра, ку япала вӑл куҫа улталама кӑна. Патрунӗнче тар кӑна, хӑратмалла.

**ИЛЛЕ.** Ман халӗ вӑрмана кайса килмелле-ха, кайран пырса илӗп.

**ТЕППИ.** Эп больницӑран паянах таврӑнас ҫук пек. Ме, ил.

**ИЛЛЕ.** Юрӗ апла пулсан... Эпӗ кайрӑмха. Больницине кайсах кил вара...

**Ҫирӗммӗш курӑну**

*Илле вӑрман уҫланкине килсе тухать. Инҫетре-инҫетре куккук авӑтать.*

**ИЛЛЕ.** Эх-эй, куккук! Миҫе ҫул пурӑнатӑп эпӗ? Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ, тӑваттӑ, пиллӗк... */Куккук сасси вӑхӑтлӑха чарӑнать/.* Тата, тата! Улттӑ, ҫиччӗ... У-у, нумай-нумай... */Пӑшалне хурӑн пуленкки ҫине хурать/.* Ҫак вырӑнтах лаша кӗҫеннӗ пек илтӗнчӗ-ҫке-ха. Аха, акӑ урапа йӗрӗн паллисем. Кунта ав лаши тапӑртатса тӑнӑ...

**КӖҪТУК** */уҫланкӑ тепӗр вӗҫӗнчен шӑхӑркаласа тухать/.* Мӗн ҫухатнӑ ку студент ирхи вӑрманта? Ӑнсӑртран, мана ҫухатман-и-ха эсӗ, тутар чӗппи? Халӗ акӑ куҫа-куҫӑнах тӗл пултӑмӑр.

**ИЛЛЕ.** Вара?..

**КӖҪТУК.** Так сказать «на узкой тропинке с глазу на глаз...». Ну?..

**ИЛЛЕ.** Мӗн «ну»? Курмастӑн-и, ак кунта урапа йӗрри те паллӑ... Ҫухалман-ха...

**КӖҪТУК** */ун-кун пӑхкаласа тӑрать/.* Темле ӗнтӗ? Сан куҫу улшӑнса кайнӑ пек туйӑнать мана...

**ИЛЛЕ** */айккинелле пӑрӑнса/.* Уй?! Ку тата, юн кӳлленчӗкӗ пулас...

**КӖҪТУК.** Тем те курӑнать сан куҫна... */Атӑ кунчинчен ҫӗҫӗ туртса кӑларать/.* Ак ҫакна тата куратӑн-и? Суккӑр пулас килмест-и сан? Эп... момент...

**ИЛЛЕ** */хӑвӑрт пӗшкӗнет те аллине пӑшал тытать/.* Ан та тапран вырӑнтан. «На узкой тропинке» терӗн-и-ха?

**КӖҪТУК** */хӑранипе аллинчи ҫӗҫҫине ҫӗре ӳкерет/.* Ӑ-ӑ... Ильяс... Ильяс Петрович, эп...

**ИЛЛЕ.** Ӑнлантӑм эпӗ эсӗ мӗнле шӳтленине... Ҫавӑн чухне, кӳлӗ хӗрринче, хӑваласа ҫитеймерӗм сана. Ун чухнех татӑклӑ калаҫу пулмаллаччӗ пирӗн хушӑра.

**КӖҪТУК.** Кур-ха эс ӑна... Маттур, Ильяс, маттур. Ну, мӗн тӑватӑн эсӗ манпа? */Пӗр утӑм ҫывхарать/.* Перетӗн-и?

**ИЛЛЕ.** Ан тапран вырӑнтан, ӳкӗнмелле пулӗ...

**КӖҪТУК** */тепӗр утӑм тӑвать/.* Ну, ну...

**ИЛЛЕ** */пӑшалне авӑрласа/.* Ан тапран терӗм... Ак ме */хӑрах аллипе кӗсйинчен тетрадь кӑларса Кӗҫтука ывӑтса парать/.* Чак каялла пилӗк утӑм, чӗркуҫлен тунката умне, ҫыр. Асту, тӗплӗнрех...

**КӖҪТУК.** Итлетӗп, итлетӗп... Мӗн ҫырмалла?

**ИЛЛЕ.** Наҫтука ма пусмӑрларӑн?

**КӖҪТУК.** Эп пусмӑрламан ӑна, вӑл хӑй мана мӑйран ыталарӗ, чуп тума та чармарӗ.

**ИЛЛЕ.** Ҫыр-ҫыр... Вӑл тӑнне ҫухатнӑ, эсӗ ҫав вӑхӑтпа усӑ курнӑ...

**КӖҪТУК.** Юрӗ тейӗпӗр, ҫыратӑп...

**ИЛЛЕ.** Хӑрах куҫлӑ Куҫмана кам, мӗншӗн вӗлернӗ?

**КӖҪТУК.** Ӑна вӗлерме мана кукка, Михаил Матвеевич, хушрӗ, тата вӑл куккан укҫа енчӗкне вӑрланӑ... тата... */Ҫӗҫҫине питӗ хӑвӑрт алла илет те Иллене хырӑмран тӗллесе перет, ҫӗҫҫи пуленккене тӑрӑнать/.*

**ИЛЛЕ** */пӗшкӗнсе юлма ӗлкӗрет. Тӗллемесӗрех/.* Ах, ирсӗр, эс ҫапла-и?.. */Куҫне хупать те, пӑшал кӗрслетет/.*

**КӖҪТУК.** Ой-ой! Вӗлерчӗ-ӗ! */Хӑрах аллипе хулпуҫҫинчен пӑчӑртаса тытать/.*

**ИЛЛЕ** */куҫне уҫса/.* Вилместӗн-ха, ан кӑшкӑр ухмаха ернӗ пек...

*Полици икӗ ӗҫченӗ хашкаса чупса килет.*

**ЯРКИН** */аран-аран сывлӑш ҫавӑрса/.* Кам? Кам кама печӗ? Мӗн эсир?!

**КӖҪТУК** */вӑйсӑррӑн/.* Курмастӑр-и? Мана печӗ...

**ИЛЛЕ.** Вӑхӑтра ҫитрӗр эсир, тавах сире... */Кӗҫтука/.* Ил аллуна, ил хулпуҫҫи ҫинчен. Нимӗнле юн та ҫук сан унта. */Полици ӗҫченӗсен енне ҫавӑрӑнса/.* Эп петӗм... ӑнсӑртран... тӗллемесӗрех...

**ЯРКИН.** Кӑна эпир тӗрӗслӗпӗр. Халӗ иксӗре те арестлеме тивет. Тӑрӑр...

**ИЛЛЕ.** Кунтан кайиччен ҫак уҫланкӑра пулса иртнӗ тискерлӗхсене тӗпчесе палӑртасах пулать. Ак кунта... юн кӳлленчӗкӗсем, юн тумламӗсем ав тип вар еннелле тӑсӑлаҫҫӗ...

*Кӗҫтук пуҫне сулкалать кӑна, нимӗн те чӗнмест.*

**ЯРКИН.** Эпир шӑпах ҫав тӗллевпе килсе тухрӑмӑр кунта... Ну, халӗ вара аллуна тӑс */сӑнчӑрлать/.* Эсӗ те, Константин Романов, тӑр. */Тӑрӑнса ларнӑ ҫӗҫӗ ҫине кӑтартса/.* Ку камӑн?

**КӖҪТУК.** Ма... манӑн...

*Ҫӗҫҫе таса хутпа чӗркесе сумкӑна чикеҫҫӗ.*

**ЯРКИН.** Ыранах кунта пулатпӑр. Хальлӗхе кайрӑмӑр...

**Ҫирӗм пӗрремӗш курӑну**

*Сухви пӳлӗмӗнче каллӗ-маллӗ уткалать, час-час чӳречерен пӑхать. Унтан чӳречине яри! уҫса ярать.*

**СУХВИ.** Ӑҫта ҫапкаланса ҫӳрет-ши уксах урипе, ларасчӗ кутне пӑчӑртаса!

*Урамран Михали сасси илтӗнет.*

**МИХАЛИ.** Эй, хӗрарӑм! Уҫ хапхана!

**СУХВИ** */васкаса тухать/.* Наччас, наччас.

**МИХАЛИ.** Килмен-и-ха кунта ҫав намӑса пӗлмен Куҫма?

**СУХВИ.** Курӑнмарӗ-ха...

**МИХАЛИ.** Хатӗрле-ха сӗтел ҫине ҫимелли-ӗҫмелли. Хырӑм */хырӑмне шӑлкалать/* тем, вырӑнта мар...

**СУХВИ.** Сан пурте вырӑнта мар...

**МИХАЛИ.** Ну-ну, йӑвашрах пул, ман чӗн чӑпӑркка вырӑнтах-и унта?!

**СУХВИ** */сӗтел ҫине ҫимелли-ӗҫмелли хатӗрленӗ май чӳречерен пӑхать/.* Ой, Михали, анаталла халӑх кӗпӗрленсе килет, малта, тем, полици те пур пулмалла...

**МИХАЛИ** */пулӑштуха хыпаланса хӗве чикет/.* Сухви, хуп мана тӗпсакайне, ыйтсан – эпӗ ҫук! Ӑнлантӑн-и?

**СУХВИ** */питне-куҫне хуплать/.* Курман-илтмен... */Тӗпсакай алӑкне уҫса унта Михалие хупать. Кӗленче тытса, йывӑр пукана тӗпсакай алӑкӗ ҫине вырнаҫтарса лартать/.*

*Полици ӗҫченӗ, ун хыҫҫӑн Кӗҫтук кӗреҫҫӗ.*

**Полици ӗҫченӗ.** Эс Михаил Ефимовӑн мӑшӑрӗ пулатӑн-и?

**СУХВИ.** Хӗрарӑмӗ...

**КӖҪТУК.** Сухви инке, Михали кукка... килте ҫук-им?

**(Малалли пулать).**

## САВӐ СӖВЕМӖ

*Галина ҪУТКӲЛ*

# Ҫичӗ ют ан пул

Курӑкӗнчен явӑнса ҫӗр ҫырли
пиҫет,
Ҫут уйӑхла, хӗвелле куҫа илӗртет.
Йӗс шӑнкрав пек сассӑмпа
мӑшӑра чӗнес,
Ҫырла евӗр таянса пурнӑҫа тӗрлес.

*Хушса юрламалли:*
Тӑван пулӑн терӗм те –
Ҫичӗ ют ан пул.
Хӑв суйланӑ савнине
Телей, ырлӑх сун.

Ҫӳл ту ҫине пӗччене
улӑхмашкӑн ҫук,
Ҫил ҫунат пек савнипе чӑрмав
пулас ҫук.
Ҫӑлтӑр ялтлатать – сӳнет,
юрату – сӳнмест,
Ҫисӗм те ҫиҫет – иртет, юрату –
иртмест.

*Хушса юрламалли.*
Хӗрлӗ чечек чиперри шаниччен
кӑна,
Ҫухаличчен илемне, ай,
упрамалла!
Кайӑк хур карти ҫулне, ай,
епле пӳлес?
Пӗртен-пӗрех пурнӑҫне хитрен
ӗмӗрлес.

*Хушса юрламалли.*
Ҫутӑ ҫавра кӳллине юхма
ирӗк ҫук,
Шуҫӑм кӑвакарччен ун ыйхийӗ
ҫук.
Уйӑх шӑвать пӗр пӗччен, эпӗ –
юнашар,
Пӳлӗх телей кӳнине –
ырран пурӑнар.

## ҪӖНӖ ЮРӐ

# Аннене

*Кӗвви Илья СТЕПАНОВӐН Сӑвви Зоя СЫВЛӐМПИН*

Сана, аннем, салам яраҫҫӗ
Юратнӑ ачусем.
Пире кӗтетӗн ирӗн-каҫӑн –
Иртеҫҫӗ ҫав ҫулсем.

Эпир ялтан тухса кайсассӑн
Юлатӑн ал сулса.
Пӗрмай сывлатӑн пулӗ ассӑн
Киле пӗччен юлсан...

Пире асра тытатӑн вӗҫӗм
Эс хӑв ҫинчен манса.
Ан кулянсам, лӑплан, аннеҫӗм,
Кун-ҫул пырать ӑнса.

Сенкер тӳпе те янкӑр уҫӑ –
Пӗр пек кӑмӑлупа.
Ҫулсем иртсессӗн те ан хуҫӑл,
Ан ватӑл эс чунпа.



# Экс-савни таварăвĕ. I Петĕр еркĕнне мĕншĕн вĕлерме хушнă?

**Нева хĕрринчи хулара 297 çул каялла – 1719 çулхи пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче – халăх Троица тÿремне йышлăн пуçтарăннă. Пурне те пĕр ыйту канăç паман – нивушлĕ император çывăхĕнчи чи илемлĕ хĕрарăмсенчен пĕрин, Мария Гамильтонăн, пуçне касса тататех палач? Нивушлĕ I Петĕр хăй юратнă хĕрарăмĕн кун-çулне татмашкăн ирĕк паратех? Сăлтавĕ те пĕртен-пĕрре кăна-çке – хĕрарăм, тĕрĕссипе, патша çывăхнерех пулма тăрăшнă кăна... Çакăншăнах пуç касаççĕ-и вара?**



● ЕКАТЕРИНА КАÇАРНĂ...



● ГАМИЛЬТОН. АЙĂПА ПУРНĂÇА КĔРТЕС УМĔНХИ КАÇ.



● I ПЕТĔР ТУЙĂМĔСЕМ ХĂВĂРТ СИВĔННĔ.

### Патша кăмăлĕ

Шотланди дворянинĕ Томас Гамильтон Раççее Хаяр Иван вăхăтĕнчех куçса килнĕ. Ют çĕршыв арçынни кĕске вăхăтрах тĕлĕнмелле хăвăрт хăпарнă карьера пусмипе, аристократи çĕнĕ юппине йĕркелеме мехел çитернĕ.

Мария Гамильтон патша çывăхне 16 çулта çакланнă. Тĕлĕнмелле хитре хĕр пулнă вăл – унăн чăн чиперлĕхне портретистсем сайра-хутра кăна çитерме пултарнă куракан патне. Çамрăклăх, тĕрĕссипе, хăех çунатлă-ха та, çакна I Петĕрĕн мăшăрĕ асăрхамасăр ирттерсе яма пултарнă-и вара? Екатерина Гамильтон пикене хăй патне илнĕ, çапла Мария фрейлина пулса тăнă.

Çамрăк фрейлина хитрелĕхĕпе кăна палăрса тăман çав. Чиперкке чее те вăйлă характерлă, çивĕч ăслă пулнă. Влаçа чикесĕр юратни унăн чунне хаярлăх, шелсĕрлĕх кÿнĕ. Çавна пулах вăл нимĕнле усал ĕçрен те пăрăнса тăман. Паллă ĕнтĕ, кун пекскерне фрейлина ролĕ хăвăртах тивĕçтерме пăрахнă. Вăл, тăванĕн карьерине асрах тытаканскер, çÿлелле хăйне евĕр хăпарма тĕв тунă – патша чунне тыткăна илме палăртнă. Сăнран Турри кÿрентерменха та, тĕллевне пурнăçа кĕртмешĕн нумай кирлĕ пулнă-и ăна? Кĕçех I Петĕрĕн капла та шучĕ çук еркĕнĕсен йышĕ ÿснĕ – вĕсен çумне Мария Гамильтон хушăннă.

Чăн та, тĕллевне пусĕпех пурнăçа кĕртеймен-ха хĕрарăм – патша ăс-тăнĕпе те, чунĕпе те хуçаланайман вăл. Арçыншăн вăл ытти еркĕн хĕрарăмсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман, император Гамильтонпа та вырăн ăшăтма кăна кăмăлланă. Кĕçех патша ун çинчен вăхăчĕ-вăхăчĕпе мансах кайма пуçланă, туйăмсем сивĕннĕ. Гамильтоншăн императорăн çывăрмалли пÿлĕмĕн алăкĕсем хупăннă...

### Утиял ăшĕнчи кĕлетке

Паллах, лару-тăру кун пек çаврăнса тухасса Мария пачах кĕтме те пултарайман. Вăл маларах палăртнă тĕллеврен ним тусан та пăрăнасшăн пулман – патша унăн пулмалла! Апла тăк мĕн те пулин шухăшласа кăлармаллах. Çамрăк хĕрарăм пĕтĕм чеелĕхне хута янă. Мария I Петĕрĕн денщикне ятарласах “юратса пăрахнă”. Иван Орлов çав вăхăтра патшан пулăшаканĕ те, секретарĕ те пулнă. Пĕтĕм информаци ун урлă тухнине кура хĕрарăм патша пурнăçĕ çинчен йăлт, кашни утăмĕ таран, пĕлсе тăнă. Кĕçех I Петĕрпе Екатерина чикĕ леш енне çула тухнă. Паллă ĕнтĕ, Орлов та, Гамильтон та вĕсемпе пĕрле тапраннă ушкăна лекнĕ.

Сăмах май, патша денщикĕ те вĕри туйăмсемпе вăрах асапланман. Хитре сăн-пит те тытса чарайман ăна. Орлов эрех-сăра, ясарлăх авăрне пуçĕпех чăмнă. Мария çакна йăлт чăтнă. Малтанхи савнине кÿрентерме те, ун çине алă çĕклеме те именмен арçын. Хĕрарăм кăмăлне ирĕке яман, унăн Орлова епле те пулин хăйĕн çумĕнчех тытса тăмалла пулнă. Анчах вăхăт иртнĕ, туйăмсем сивĕнсех пынă, йĕри-тавра вара чиперук татах та нумай. Мария тактикине улăштарнă – ĕнтĕ вăл Орлова вырăнпа мар, пуянлăхпа астарма пуçланă. Гамильтон çавăн чухлĕ пурлăх ăçтан пулни тĕлĕнтерет-и? Ăçтан-ăçтан... Патша майрин сахал-им хаклă чул? Çапла, ан тĕлĕнĕр, шăпах унăн, Екатеринăн, пурлăхне вăрлама пуçланă та Мария. Ытларах чухне вăл çав чулсене сутнă, укçине Орлов патне йăтнă. Арçыннăн темĕн тĕрлĕ парăм та пулнă. Мария паракан укçа-тенкĕпе вăл вĕсемпе татăлнă. Анчах та хăй пурнĕрех хĕрарăм çине алă çĕклеме пăрахман.

Мария ахальтен чăтман темелле. Денщикĕ çумĕнчи хĕрарăма тепĕр чухне I Петĕр çапах та асăрхакаланă, каççерен хăш-пĕр чухне Марийăн çывăрмалли алăкне пырса шакканă. Анчах туйăмсем малтанхи хĕрÿлĕхпе палăрман, хăна та малтанхи пек тăтăш пырса çÿремен.

...Пĕррехинче патша таврашĕнче хăрушă сас-хура сарăлнă – инçех те мар утиялпа чĕркенĕ ача виллине тупнă. Тÿрех тĕпчеме, айăплине шырама пуçланă. Тупайман. Тен, çак ĕç-пуç вăхăт иртнĕ май манăça та тухĕччĕ, анчах та шăпа урăхларах çырнă курăнать.

I Петĕр кĕсйинче хут выртнă – такам хăйĕн тăшманĕ çинчен патшана çырсах пĕлтерме шухăшланă. Анчах та императорăн ăна вулама ниепле те алă çитмен. Алă çитнĕ вăхăтра вара хут кĕсьерен... çухалнă. Патша Орлова тарăхнă – такама хÿтĕлесе хăварас тĕллевпе хайхи хута вăл илнĕ пулĕ тесе шухăшланă. Урса кайнăскер денщика хăй патне чĕнтернĕ. I Петĕр куçне-пуçне тавăрса пăрахнине курсан Орлов хăраса ÿкнĕ, патша сăмах та чĕнсе ĕлкĕриччен унăн ури умне чĕркуçленнĕ, вăрттăн çуралнă ача пирки хăй нимĕн те пĕлменнине ĕнентерме тăрăшнă – хăйне шăпах Мария Гамильтонпа çыхланнăшăн чĕнсе илнĕ тесе ăнланнă вăл...

Малтанах I Петĕр чĕнейми пулса ларнă – пулăшаканĕнчен çак сăмахсене пачах та кĕтмен-çке вăл. Гамильтон пÿлĕмĕнче тăрук ухтарма хушнă. Фрейлина патĕнче чăнах та патша майрин хаклă чулĕсене тупнă. Çакăн хыççăн Марийăна урине тăлласа тин кăна хута янă Петропавловск крепоçне хупнă. Орлова та малтанах кÿршĕ камерăна ăсатнă-ха, анчах та каярахпа ирĕке кăларнă.

Гамильтон пĕр чарăнми калаçнă, патша майрин хăшхăш япалине вăрланине йăлт каласа кăтартнă – укçана еркĕнне картла выляса кĕнĕ парăмĕсене татмашкăн панине те пытарман. Пушă вĕçĕ лекмессерен тата ытларах “аса илсе” пынă Мария – эмел ĕçсе икĕ хутчен варти пепкисене вĕлернĕ, лешне вара, утиялпа чĕркесе пăрахнине, çуралнă хыççăн хăй аллипе валашкари шывра путарнă...

### Юлашки хут чуптунă

Ача вĕлернине следстви тăватă уйăха яхăн тĕпченĕ. Ку енĕпе Гамильтон патша денщикне усал сăмахпа асăнман – Орлов пепкесемпе çыхăннă ĕç-пуç çинчен нимĕн те пĕлмен иккĕш. Тĕрĕссипе, I Петĕр çакăн çинчен пуçласа шăпах хăйĕн пулăшаканĕнчен илтнĕ вĕт-ха!

Патша йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн Мария Гамильтона вĕлерме палăртнă. Çамрăк фрейлинăна Троица тÿремне илсе кайнă. Ăна вĕлернине курма темĕн чухлĕ халăх пуçтарăннă. I Петĕр еркĕнĕ эшафот çине хурă хăюпа илемлетнĕ шурă кĕпе тăхăнса хăпарнă. Патша тахçан хăй савнă хĕрарăм çумĕнче мĕн юлашки самантчен пулнă, палач унăн хушăвне тĕп-тĕрĕс пурнăçлатăр тесе тĕрĕслесе тăнă. Куракансем каласа кăтартнă тăрăх, айăпа кĕнĕ фрейлинăн пуçĕ I Петĕрĕн ури айнех кусса пынă. Патша хĕрарăм пуçне çĕклесе илнĕ, тутинчен чуп тунă, хăй çине хĕрес хывнă та пĕр сăмах та чĕнмесĕр айккинелле пăрăнса утнă.

### Ашшĕ кам?

Паянчченех çак ыйтăвăн хуравĕ пирки нумайăшĕ пуç ватать – патша мĕншĕн хăйĕн еркĕнне вĕлермех хушнă. Екатерина çапах та ăна каçарнă вĕт-ха – упăшкин еркĕнĕ пулнăшăн та, япала вăрланăшăн та. Унтан та ытла, мăшăрне те çак хĕрарăма каçарма сĕннĕ. Анчах та патша кăмăлне нимĕнпе те çавăрайман. Тен, тăватă çул маларах тухнă Указ çапла тума хистенĕ ăна – вăл çут тĕнче курайман ачасен прависене хÿтĕленĕ.

Çак документпа килĕшÿллĕн, çылăхлă хутшăнăва пула кăна – чиркÿ пил памасăр – çуралнăшăн ачана никам та айăплама пултарайман. Çак акта пулах Раççейре приютсен шучĕ ÿссе кайнă, хĕрарăмсене асăрхаттарса хунă – айккинчи хутшăнусене пула кун çути курнă пепкесене вĕлерме юрамасть, приюта пырса памалла. Курăнма вăтансан хăть алăк патне пырса хумалла. Хĕрарăм хăйĕн чунне те, ачин пурнăçне те çăлнă çапла. Гамильтон çапла вара патша Указне тÿрремĕнех пăснă пулса тухать. Екатерина патша майри вăрра каçарма хатĕр пулнă, император кăмăлне кăна çавăрайман.

Анчах та пĕлекенсем урăхларах та шухăшлаççĕ. Кун çути курнă, анчах та хыççăнах чунне кăларнă ачан ашшĕ, тен, Орлов та пулман? Тен, çав пепкере патша юнĕ чупнă?..

### Кунсткамера

XVIII ĕмĕр вĕçĕнче Екатерина Дашкова княгиня Раççей ăслăлăхĕсен академин финанс ĕç-хĕлне тĕрĕслеме пуçланă. Çавна май Кунсткамерăра спирт вышкайсăр нумай тăкакланнине тупса палăртнă. Пăхса тăракана чĕнсе илнĕ. Лешĕ ăнлантарнă тăрăх, спиртпа наука тĕллевĕпех усă кураççĕ – путвалти кантăк икĕ савăтра çур ĕмĕре яхăн арçынпа хĕрарăм пуçĕсем упранаççĕ. Савăчĕсем питĕ пысăк, çавна пула спирт та нумай тăкакланать. Дашковăна çав истори кăсăклантарса янă. Документсене тишкернĕ хыççăн çакă уçăмланать – хайхи пуçсенчен пĕри Виллим Монс иккен: ăна патша майрипе çыхăнăва кĕнĕшĕн айăпласа вĕлернĕ. Тепри вара шăпах – леди Гамильтон пуçĕ. Сас-хура тăрăх, хыпар сарăлнă хыççăн пуçсене II Екатерина тишкернĕ, каярахпа вĕсене çав путвалтах çĕре чавса чикме хушнă.

/SPB.AIF.RU/.

## Тискер кайăкпа çыхăннă 5 самант

1. Çĕр çул каялла кăна-ха Амур леопарчĕсене сыхласа хăварас ыйту пулман та. Раççей хĕвелтухăç пайĕнчен çынсем куçса пырсан Инçет Хĕвелтухăç леопарчĕсене нумайăн тытма пуçланă. 1917 çулччен Китай хапăлласах туяннă – тирĕшĕн кăна мар, кĕлеткин пайĕсемпе Тибет медицининче анлă усă курнă. Совет тапхăрĕнче леопард çын тăшманĕ пулса тăнă – вăл пурăнакан вырăнта пăлан ĕрчетме пуçланă, икĕ çак чĕр чун пĕр-пĕринпе епле килĕштерчĕр? Ĕнтĕ заповедникра та канлĕх пулман – ăна унта та тытма ирĕк панă. 1956 çулта кăна тăна кĕнĕ çын. 1973 çулта вара вĕсене пĕрремĕш хут шута илнĕ те... пурĕ те 40 леопард кăна тăрса юлни палăрнă. Çапла вĕсене Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ. Ку та пулăшман – 80-мĕш çулсенче 25-30 леопард кăна юлни палăрнă. Кун пек йыша ахаль чухне çăлма та тăрăшмаççĕ – усси çук, пĕрех вилсе пĕтеççĕ. Анчах леопард пĕтме шухăшламасть те – халĕ вĕсен йышĕ 50-а çитни паллă.

2. Инçет Хĕвел тухăç леопарчĕ кăна пирĕн хĕле чăтма пултарать. Сивĕре унăн çăмĕ 7 см çитет. Вăйлă та вăрăм урине пула сунарĕ ăнăçлă вĕçленет. Çынпа мирлĕ пурăнать. Çемьене хаклать. Тепĕр чухне аçи амине пăрахмасть, çурисене ÿстерме пулăшать. Ытти леопардсен хушшинче кун пекки çук.

3. Леопарда зоопаркра ÿстерсе тайгана кайса яма та юрать. Çакна 1998 çултанпа пурнăçлаççĕ. Çапах та мĕн юлнине сыхласа хăварасси тĕп тĕллев шутланать.

4. Браконьерсене пула вĕсем пачах та вилсе пĕтме пултараççĕ: 10-15 амине тытсанах пăнчă лартма юрать. Çавăн пекех çулсем сарни те вĕсене пĕтерме пултарать – чĕрчун ун урлă каçаймасть.

5. 2025 çул тĕлне йыш 100-е çитме пултарать. Шел те, ку та питĕ сахал. Инçет Хĕвелтухăç леопарчĕн тăшманĕ нумай, вĕсенчен пĕри – тигр. Çапах та популяци чĕрĕлессе шанас килет.

/«Комсомольская правда»/.

## ЛĔП-ЛЕП




● ТЕ «МАНĂН УРАМ» ТЕСЕ ĂНЛАНМАЛЛА, ТЕ – «МАНĂН СĂНСЕМ»...

О.РОМАНОВА сăнӳкерчĕкĕ.

**Манăн юлташсенчен курăк шăрши кĕнине каларĕ анне. Çавăнтанпа шухăшласа çӳретĕп-ха – курăк шăршине анне ăçтан пĕлет тата?**

* * *

**Шалу илнĕ чух банкомат темĕнле сасă кăларчĕ. Кулчĕ ахăртнех...**

* * *

**Ирхине, тĕкĕр умне пырсан, манăн пластика хирургне качча тухас килет. Кăнтăрла поварпа çемье çавăрасси пирки ĕмĕтленетĕп. Каçхине массажист пирки шухăш канăç памасть. Ахăртнех, çăмăлттай хĕр эпĕ...**

* * *

**Çынна ăнланса пĕтерме йывăр – садикре пурте “авланаççĕ”, “качча тухаççĕ”, 25 çула çитсен вара “иртерех-ха” теççĕ.**

* * *

**Каççерен тем шăнакан пулса кайрăм. Те тепĕр утиял илмелле, те качча тухмалла. Упăшка, паллах, ыталаса ăшăтĕ, анчах, шухăшласа пăхсан, утиял тарăхтармасть...**

* * *

**– Хĕрĕм, – вĕрентет амăшĕ нумаях пулмасть çемье çавăрнă пепкине, – упăшкуна тăтăшах вĕреме ан кĕрт – пăсланса çухалĕ тата...**

* * *

**Çамрăк арăм упăшкине апатпа сăйлать:**

**– Хаклăскерĕм, эпĕ хальлĕхе икĕ тĕрлĕ апат кăна лайăх хатĕрлеме пĕлетĕп: ăшаланă пулă тата торт.**

**– Чунăм, – тет арçын. – Эсĕ каярахпа темĕн те пĕçерме вĕренсе çитĕн-ха, манăн çакна кăна пĕлес килет, халĕ мĕн çиетĕп эпĕ: ăшаланă пулă-и е торт-и?**

* * *

**Çӳлти хутра пурăнакан хĕрарăм ирех ачи çине питĕ хытă кăшкăрнипе аялти хутра пурăнакан Сидор Петрович та, сых ятне тесе, хваттерте тирпейленĕ, ăшă-рах тăхăннă.**

* * *

**– Эпир санпа питĕ телейсĕр çынсем, – тет арăмĕ упăшкине.**

**– Мĕншĕн ун пек шухăшлатăн?**

**– Ара, эпир тинĕс хĕрринче пурăнатпăр, отпуска та ниçта кайма пĕлмелле мар.**

* * *

**Хĕрарăм кĕç-вĕç вилес пек выртать.**

**– Эсĕ тепре авланăн-и? – ыйтать хайхи упăшкинчен.**

**– Çук, мĕн эсĕ?**

**– Мĕншĕн?**

**– Санран лайăххине пĕрех тупаймăп. Сан пекки вара текех кирлĕ мар...**

* * *

**– Мĕн эсĕ шăна хăваласа чупатăн? – ыйтать арăмĕ упăшкинчен.**

**– Ан шарлаха, ан чăрмантар, – хуравлать лешĕ. – Пилĕк шăнана тĕп турăм ĕнтĕ: иккĕшĕ – аçа, виççĕшĕ – ама.**

**– Мĕншĕн ун пек шухăшлатăн вара?**

**– Мĕн иккĕленмелли пур? Иккĕшĕ сăра кĕленчи çинче ларатчĕç, виççĕшĕ – тĕкĕр çинче.**

* * *

**– Эсĕ мана урăххипе улталани пирки илтĕнсе калаçаççĕ, – мăкăртататать арçын.**

**– Уй, ан ĕнен, суяççĕ.**

**– Çынсем калаçнă тăрăх, сан пата кӳршĕ ялтан ветеринар Васça килсе çӳрет-мĕн.**

**– Уй, вăт ку вара чăнах суя!**

* * *

**– Эпĕ санăн шăлаварна кӳрше патăм.**

**– Мĕн тума?!**

**– Вăл сана пурпĕрех килĕшмест вĕт-ха.**

**– Мана санăн аннӳ те килĕшмест. Ăна та кӳршĕсене парăпăр-и?..**

* * *

**Пĕчĕк арçын ача лавккана кĕрсен тетте туянса пама ыйтса нихăçан та тӳрех кăшкăрса макăрма пуçламан. Вăл шăппăн кăна ашшĕнчен:**

**– Атте, санăн та ачалăха йывăр та тĕксĕм, савăнăçсăр иртнĕ-и? – тенинчен пуçланă.**

* * *

☺И-ХИ-ХИК☺

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. **Песок,** ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Работаем** без выходных. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** пустотелые 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40; полнотелые 20х20х40 – заводские; **ЦЕМЕНТ** – недорого. Кассовый чек. Доставка. Разгрузка. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**15.Кирпич** любой, керамблоки, **кольца. Бурение.** Т. 89613393363.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – около 100 видов, **СЕТКУ СВАРНУЮ,** кладочную, штукатурную; проволоку, столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 89379522211.

**24.Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники,** опрыскиватели, **погрузчики,** БДФ. Низкие цены. Д-ка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**27.КИРПИЧ** рядовой, облицовочный, **блоки керамзитобетонные.** Доставка. Т.8-903-322-02-08.

**61.ЗАБОРЫ** и т.д. Т. 89877372939.

**104.ТЕПЛИЦЫ по низким ценам.** Доставка. Сборка. Т. 48-16-54.

**106.Кольца колодезные, канализационные.** Скидки. Доставка. Т. 8-927-841-62-47.

**129.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната.** Д-ка. Скидки. Т. 89276676202.

**142.Окна – дёшево.** Т. 89276684382.

**165.Бетон, ОПГС, песок.** Доставка. Скидки. Т. 8-967-790-61-16.

**172.Теплицы оцинкованные** от производителя. **Доставка.** Сборка. Т. 8-987-669-34-19.

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**28.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**147.Тёлок, коров, бычков, лошадей.** Т. 8-903-389-85-72.

**148.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-905-197-50-04.

**149.Коров, лошадей, бычков, тёлок.** Т. 8-903-066-46-41.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев, скважин. Навесы.** Т. 8-967-471-50-70.

**43.Бурение скважин** "под ключ". Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8(8352) 215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**77.Натяжные ПОТОЛКИ за 1 день.** Т. 8-937-397-24-42.

**87.**Савăнăçлă **ТАМАДА,** видео, чăваш ташши-юрри. Т. 89373935779.

**125.Бурение скважин на воду.** Тел. 8-906-381-60-37.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**159.Утепление домов пеноизолом.** Гарантия. Скидки. Т. 380373.

**164.Кивелнĕ электропроводка** – пушар хăрушлăхĕ. **Специалистсем улăштараççĕ.** Т. 89370153540.

**201.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ,** натяжные **потолки. Т.89276672088.**

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Познакомлюсь с женщиной от 26 до 42 лет. О себе: 40/170/70, чуваш. Т. 8-937-942-17-20.

# Сăмах каçмăш

**Николай КРАСНОВ**
**Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**

1. Пушă. 2. Пушкăртсен паттăрĕ – ... Юлаев. 3. Хурт-кăпшанкă. 4. Кăнтăрти йывăç. 5. Инçет хĕвелтухăçĕнчи утрав. 6. Пушхир кушакĕ. 7. Тинĕсри флот карапĕ. 8. Чăваш композиторĕ. 9. Вырăс çыравçи. 10. Чăваш халăх артисчĕ – Кĕлпук Мучи. 11. Кĕскетнĕ винтовка. 12. Кĕпер пайĕ. 13. Вăл çĕршыв старости пулнă. 14. Çăмăл атлетикăри вăрăм дистанци. 15. Çывăх тăван. 16. Вырăссен паллă механикĕ. 17. ... – Ларионов – Крутов. 18. Пĕрремĕш космонавт. 19. Ят-шыв палли. 20. Ĕлĕкхи налук. 21. Чăваш сăвăç-юрăçи. 22. Водород бомбин «ашшĕ». 23. Тĕвесен ушкăнĕ. 24. Ларма-тăма пĕлмен çын.



УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

«ХЫПАР»
Издательство çурчĕ” автономи учрежденийĕ

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Чăваш Хĕрарăмĕ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 01.04.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 8115. Заказ 1080.